Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 23 ШАМАТКУН
93 (4906)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисен союзлă тата автономлă советлă социалисăмлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен пулас суйлавĕнчи блокĕ!

РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕ

Пĕтĕм Российăн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ РСФСР Верховнăй Совет суйлавне 1938 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче ирттерме йышăнчĕ. Апрелĕн 26-мĕшĕнчен РСФСР Верховнăй Советне суйламали кампани пуçланать.

1937 çулти декабрĕн 12-мĕшĕнче Совет Союзĕнчи халăхсем ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйларĕç. Ку вăл Сталинла Конституци тăрăх пурне те тивĕçлĕ тан-пĕртанлă малтанхи суйлав пулнă. Суйлав рабочисемпе колхозниксен производствăлă тата политикăлă активлăхне питĕ вăйлăн ӳстернине кăтартрĕ. Пĕтĕм совет халăхĕ большевиксен парти тавра, унăн Сталинла Тĕп Комитечĕ тавра нихçанхинчен ытла тачă пĕтĕçрĕ. Декабрĕн 12-мĕшне — пĕтĕм халăх праçникне, коммунисла партипе совет влаçĕн чаплă çĕнтерӳне, кăтартнă куна ĕçсынисем нихçан та манас çук. Пĕтĕм суйлавçăсенчен 96,8 проценчĕ суйлава хутшăнни, кунашкал активлăха истори курман, иртнĕ вăхăтсенче хамăр çĕршывра та пулман.

ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕнче епĕр политикăла тата организацилĕ пысăк опыт туянтăмăр. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă кандидатсене пурне те Верховнăй Совета суйланă. **Халĕ пирĕн умра тăракан задач вăл — РСФСР Верховнăй Совет суйлавне ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕнчен тата лайăхрах, тата организацилĕрех ирттересси пулать.**

Иртнĕ суйлавра коммуниссем партире тăманнисемпе блок туса тăван çĕршывăн чи шанчăклă, чи мухтавлă ывăлĕсемпе хĕрĕсене, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăй-халне хурса ĕçлекен партире тăракан тата партире тăман большевиксене ССР Союзĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Коммуниссен партийĕ халăхпа—рабочисемпе, хресченсемпе, интеллигенципе çыхăну тытасси суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче тата ытларах çирĕпленчĕ. Суйлав кампани вăхăтĕнче ĕçсынисем хăйсен тăван коммунисла партийĕпе нихçанхинчен ытларах тачă сыхăнчĕç. **РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блокне тата ытларах çирĕплетмеле.** РСФСР Верховнăй Совет суйлав кампанийĕнче парти организацийĕсен, коммуниссен тĕп задачĕ — партире тăманнисемпе тачă çыхăну тытасси тата ăна вăйлатасси пулать. Çакна тума пире коммунисла партин Тĕп Комитечĕ тата Сталин йулташ вĕрентет.

РСФСР Союза пĕрлешнĕ 11 союзлă республикă хушшинче тивĕçлипех малти вырăна йышăнать. РСФСР-че крайсемпе облăçсем 32, автономлă республикăсем 17, автономлă облăçсем 6, нацилĕ округсем 12 пур. РСФСР нумай нацилĕ государствă. РСФСР-че пурăнакан халăхсен 4/5 пайĕ аслă вырăс халăхĕ, çак халăх помещиксемпе капиталиссен влаçне çĕмĕрсе тăкассиншĕн, социалисăмшăн кĕрешес йалăва чи малтан çĕкленĕ. Вăл хăй çеç мар ирĕке тухрĕ, ĕлĕк вырăс помещикĕсемпе капиталиссем пусмăрланă нумай йышлă нацисене ирĕке тухма, ирĕклĕ, тулли правалă пулма, тетелĕ те савăнăçлă пурнăç тума пулăшрĕ.

РСФСР — индустрилĕ пысăк та хăватлă государствă. РСФСР промышленнăçĕ ССР Союзĕн пĕтĕм промышленнăç продукци хисепĕнче виçĕ пайĕнчен икĕ пайне ытла йышăнса тăрать. РСФСР-че шултра промышленнăç центрĕсем, индустрилĕ гигантсем, автомобил, трактăр, авиаци промышленнăçĕсен пысăк савăчĕсем вырнаçнă.

Республика промышленнăçĕн виçи Хĕвеланăç Йевропари малта пыракан капиталисăмла çĕршывсен тата Америка промышленнăçĕн виçине çитнĕ, промышленнăçĕн уйрăм отраслисем тăрăх вĕсенчен те иртсе кайнă.

РСФСР йалхуçалăх продукци тăвас ĕçре те ССР Союзĕнче пĕрремĕш вырăнта тăрать. ССР Союзĕн пĕтĕм йалхуçалăх продукцинчен 70 проц. РСФСР парать. Промышленнăçпа йалхуçалăхĕ хăватлă ӳсни — РСФСР ĕçсынисен пурнăçĕпе культурине тата ытларах çĕклентерет.

Суйлав кампанийĕ пуçланнă май агитацилĕ-массăлă ĕçе анлăн сармала. **Кашни суйлавçăна РСФСР Конституцийĕпе суйлав саккунне тĕплĕн ăнлантарса памала.** Ку суйлавçăсем пурăнакан вырăнта: предприйатире, колхозра, учрежденире, шкулта, уйра ĕçлекен бригадăсемпе звенăсенче пулмала. Çак ĕçе тума агитаторсемпе пропагандиссен нумай пинлĕ çарне мобилизацилемелле.

Суйлав участки агитаципе пропагандă тата организацилĕ ĕçсен тĕп вырăнĕ пулмала. Организаципе техника ĕçсем йенчен илсен, — Советсен суйлавçăсен списокĕсене лайăх хатĕрлес пулать, иртнĕ суйлаври йанăшсем тепĕр хут ан пулччăр, вăхăтра суйлав участокĕсен сурчĕсене хатĕрлесе, вĕсене культурлă сăн-сăпат парас пулать.

Парти тата обçăлла организацисен суйлав комиссийĕсене чи лайăх, политикăла шанчăклă çынсене уйăрас пулать.

Тăпмансем РСФСР Верховнăй Совет суйлавне ӳсĕмлĕ ирттерессине чăрмантарасшăн кĕрешĕç. Пирĕн обязаннăç — чĕрĕ куçлă, сисĕмлĕ пулса çийĕнчех вĕсене тăрă шыв çине кăларса тытмала.

Парти организацийĕсемпе советсен задачисем питĕ пысăк. Суйлав кампанине хуçалăхла-политикăлă задачсене анăçлă пурнăçа кĕртнипе, социалисăм строительстви пур участокĕсенче те стахановла йухăма анлăн сарнипе ирттермелле.

Советсен вырăнти органĕсен пысăк ĕçсем тумала. Совет органĕсен суйлавçăсен списокĕсене вăхăтра та тĕрĕс çырса хатĕрлемелле, кашни суйлавçăна уйрăмах июнĕн 26-мĕшĕнче, 18 çул тултаракансенчен пуçласа пурне те, хăйсене РСФСР Конституцийĕ паракан правапа усă курма май памала.

РСФСР Верховнăй Совет суйлав кампанийĕ, итти Союзлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ пекех, партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕпе çыхăнса тăрать. Партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕ ĕçсынисен малта пыракан отрйачĕн — Коммуниссен партийĕн речĕсене тата çирĕплетет. Партин йертсе пыракан органĕсене ĕçре тĕрĕсленĕ, чи шанчăклă большевиксем суйланассĕ. РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕ партин йертсе пыракан органĕсене çĕнĕрен суйланă йулташсемшĕн политикăлă тĕрĕслӳ пулать.

Российăн федерацийĕ хăй çĕрсен талкăшĕпе кăна мар, хăй сăрт-тăвĕсен пуйанлăхĕсемпе кăна мар, хăйĕн йуханшывĕсемпе кăна мар вăйлă. Вăл чи малтан халăх пĕрлĕхĕпе тата хăвачĕпе вăйлă.

Вырăс халăхĕ пĕтĕмпе Совет çĕршывĕн халăхĕсемпе Союз туса пĕтĕм тĕнчери чи вăйлă государствă туса хучĕ.

РСФСР Верховнăй Совет суйлав кампанине большевикла сарса, ăна ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕнчен тата лайăхрах, тата организацилĕрех ирттерĕр. Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокне тата ытларах çирĕплетĕр. Кашни суйлавçă РСФСР Конституцийĕпе суйлав саккунне тĕплĕн пĕлсе тăтăр.

РСФСР-ĕн чи лайăх çынисем Ленин—Сталин партийĕ чĕннипе, партири тата партире тăман большевиксем, политикăла активлăхăн çĕнĕ çĕклемĕвĕн пуçне тăрĕç. Иккĕленмели çук, РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем политикăла активлăх вăйлăн çĕкленнине иртĕç. Пĕтĕм суйлавçăсем, пĕр çын пек пулса, хăйсен государствăлă тивĕçне пурнăçа кĕртĕç, хăйсем большевикла партишĕн, унăн Сталинла Тĕп Комитечĕшĕн тата Совет правительствишĕн чĕререн тăрса кĕрешнине кăтартĕç, РСФС Республикĕн аслă çĕршыва тата аслă халăха тивĕçлĕ Верховнăй Советне туса хурĕç.

Рабочисемпе хресченсем! Суйлав кампанине сарса пырăр! Пĕрле пулса союзлă тата автономлă советлă социалисăмлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлама чи лайăх, Ленин — Сталин ĕçне вĕçне çитиччен парăннă çынсене палăртăр!

Союзлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем

Украина СС Республикĕ

Украинă СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Украинă СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсен кунне çирĕплетнĕ, çавăн пекех Тĕп Суйлав Комиççин составне, суйлав округĕсен территорилĕ составĕне вĕсен хисепне çирĕплетнĕ.

Украинă СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсене 1938 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче туса ирттерме йышăннă. Апрелĕн 26-мĕш — суйлав кампани пуçламĕшĕ.

Украинă СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсене ирттерес тĕлĕшпе ĕçлеме Тĕп Суйлав Комиççи туса çирĕплетнĕ. Суйлав Комиççин председателне Курач йулташа çирĕплетнĕ.

Украинă СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлама Украинăра пурĕ 304 суйлав округĕ пулать. Суйлав кунне — июнĕн 26-мĕшне канмалли кун тума йышăннă.

Белоруççи СС Республикĕ

Белоруççи СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ Белоруççи Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсене 1938 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче туса ирттерме йышăннă. Çакăн пирки канмалли кун — июнĕн 24-мĕшĕ республикăра июнĕн 26-мĕшне куçать.

Белоруççи СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсене ирттерме Тĕп Суйлав Комиççи туса çирĕплетнĕ. Суйлав Комиççин председательне Обушенко йулташа çирĕплетнĕ.

Белоруççи СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлама пурĕ 273 суйлав округĕ пулать.

„Хамăр сасăсене совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн паратпăр"

Сталин йачĕпе тăракан автосавăтри (Мускав) рабочисем, инженерла-техникăлă работниксем тата служащисем Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсен кунне палăртни çинчен тата суйлав кампани пуçланасси çинчен йышăннă постановленине пысăк хавасăхпа кĕтсе илнĕ.

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕн постановленине савăтра радио тăрăх итлессине организацилене.

— Июнĕн 26-мĕшĕнче РСФСР-ти ĕçсынисем, пурте пĕр çын пек пулса, суйлав йешчĕкĕсем патне пырса, хăйсен сассисене совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн, Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр йуратса, тăнине ĕçре кăтартса пана çынсемшĕн парĕçĕ, — тесе каланă радиопередача пĕтнĕ хыççăн тимĕрçсен цехĕнчи конструктăр Грузинцев йулташ.

* *

Клара Цеткин йачĕпе тăракан хапрăкра (Мускав) апрелĕн 21-мĕшĕнче нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ. Работницăсем, рабочисем, инженерсемпе техниксем пурĕ 2.500 çын ытла Пĕтĕм Российăрин Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕн решенине пĕр шухăшлăн саламланă.

* *

РСФСР Верховнăй Совет суйлав кампани пуçланасси çинчен илтнĕ хыпара Донри колхозниксем пысăк савăнăçпа кĕтсе илнĕ.

— Епĕр, казаксем, суйлав кампани пуçланассине пит хытă кĕтрĕмĕр, — тенĕ Богайевск станицинчи Ильич йачĕпе тăракан артелри партире тăман 60 çулхи казак-колхозник. — Совет казакĕсем-колхозникĕсем суйлавсене коммуниссен партийĕ тавра татах та таччăн пĕтĕçнипе, коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕмĕреймен блокĕ туса пыраççĕ.

(ТАСС).

Сталин йулташ—грузин халăхĕн пĕрремĕш кандидачĕ

Тбилисири чылай предприйатисенче суйлав умĕнхи пухусем пулса иртнĕ. Вĕсенче Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйламалли кандидатсем тăратнă.

Тбилисири Сталин йачĕпе тăракан пăравуссем йусакан савăтри рабочисем, инженерсемпе техниксем 4.000 çын Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама пĕрремĕш кандидата хаклăхсен йуратнă çулпуçне Иосиф Виссарионăвич Сталина тăратнă.

Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйламалли кандидатсене Сталин йулташăн шанчăклă соратникĕсене — Совет правительствин пуçлăхне В. М. Молотав йулташа, сталинла наркома Л. М. Каганович йулташа, орденлĕ Грузи большевикĕсен руководительне — Л. П. Берийа йулташа тăратнă.

Депутата суйламалли кандидатсен шутĕнче — Сталин йачĕпе тăракан савăтри чи лайăх стахановец Иван Алексейевич Девсурашвили слесăр пур.

(ТАСС).

Коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕнеймен блокĕ сывă пултăр!

(Шупашкарти Деткомиççи хапрăкĕнчи рабочисемпе, работницăсен служащисен тата инженерла-техникăлă работниксен митингĕнче йышăннă резолюцирен).

Епĕр — Деткомиççи хапрăкĕнчи рабочисемпе работницăсем, служащисем тата инженерла-техникăлă работниксем — Пĕтĕм Российăн Тĕпĕçтăвком президиумĕ РСФСР Верховнăй Советне суйламалли куна палăртса йышăннă постановленине чĕре тулли хаваслăхпа саламласа кĕтсе илтĕмĕр.

1937 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче — ССРС Верховнăй Советне суйланă кун — епĕр хамăр сасăсене тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн, Ленинăн—Сталинăн аслă парти ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлекен большевиксемшĕн паттăмăр, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăларăмăр. Вăл кун епĕр хамăрăн тăван коммунисла партипе совет правительствишĕн сасăларăмăр.

Июнĕн 26-мĕшĕнче РСФСР Верховнăй Советне суйламалли кун коммуниссемпе партире тăманнисен блокне туса, Верховнăй Совета çĕршывăн чи лайăх çыннисене депутата суйлăпăр.

Суйлав кампани вăхăтĕнче Сталинла Конституцине тата суйлав саккунне отличнă вĕренме пулатпăр, социалисăмлă ăмăртăва вăйлатса стахановецсен ретне пысăклататпăр, хапрăк программине ирттерсе тултаратпăр.

Суйлава 100 проценчĕпех хутшăнса хамăрăн политикăлă активлăха кăтартăпăр! Сталинла Тĕпком тавра тата тачăрах пĕтĕçĕр!

Коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕнеймен блокĕ сывă пултăр!

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ йуратнă Сталин йулташ!

Тата лайăхрах, организацилĕрех ирттерер

РСФСР Тĕпĕçтăвкомĕ РСФСР Верховнăй Советне суйламалли кун çинчен йышăннă постановленине рабочисемпе колхозниксем, интеллигенци питĕ пысăк хаваслăхпа йышăнса илчĕç.

Енер Шупашкарта чылай предприйатисемпе учрежденисенче рабочисемпе служащисен пухăвĕсем пулса иртрĕç.

Полиграфтрестăн Шупашкарти типографинче ĕçлекен рабочисемпе республикăри хаçат редакцисенче ĕçлекен работниксен пĕрлехи пухăвĕ (пухура 200 çын йахăн пулнă) йышăннă резолюцире РСФСР Тĕпĕçтăвкомĕ РСФСР Верховнăй Совет суйлавне июнĕн 26-мĕшĕнче ирттересси çинчен йышăннă постановленине ырласа çапла каланă:

— ССРС Верховнăй Совет суйлавĕ вăхăтĕнче, коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерчĕ. Пĕтĕм çĕршыв Ленин—Сталин партийĕн çĕнтерӳлĕ политикишĕн сасăларĕ. Епĕр çак блока тата ытларах вăйлатма, хамăр ретсене Ленин—Сталин партийĕпе Сталин йулташ тавра тата ытларах пĕтĕçтерме, РСФСР Верховнăй Совет суйлавне ССРС Верховнăй Совет суйлавĕнчен те лайăхрах тата организацилĕрех ирттерме чĕнетпĕр.

РСФСР Верховнăй Советне суйлама кандидата хамăр çĕршыври чи лайăх çынсене, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вай-хăватне хурса кĕрешекен патриотсене тăратăр!

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Изогиз РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕ тĕлне кăларнă Н. Денисăв, В. Правдин, Н. Ватолина тата З. Правдина художниксен плакачĕ — „РСФСР Верховнăй Совет суйлавне социалисăмла ăмăртури çĕнĕ çĕкленӳпе, производствăра çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илер!" (Союзфото).

Пичет кунĕ умĕн

Винница облăçĕнчи предприйатисенче тата колхозсенче пичет кунне хатĕрленес ĕç пуçланнă. Черневецк районĕнчи „Хĕрлĕ Октябĕр" колхозра йалкорсем пичет кунĕ çинчен колхозниксемпе калаçусем туса ирттереççĕ. Вйатровск колхозĕнчи йалкорсем большевикла пичет историне вĕренеççĕ.

(ТАСС).

Республикăра 2019 гектар тĕштырă акнă

Апрелĕн 20-мĕшне Чăваш республикинче пĕтĕмпе 33.389 гектар клевĕр акса, плана 58,4 процент тултарнă. Тĕштырăсене 2019 гектар çине акнă. Республикăри çак районсем тĕштырăсене акма тухнă: Улатăр, Патăрйел, Куславкка, Шăмăршă, Шăнкăртам, Çĕмĕрле, Йелчĕк тата Тăвай.

Орденоносĕц Павлăв трактăрис бригадинче

ЙЕЛЧĔК, (телефонпа). Орденоносĕц Павлăв йулташ бригадинчи трактăриссем май уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕç. Бригадăри кашни трактăрис ытларах сухаласшăн, çунтармалли йапаласене перекетлессишĕн ăмăртать. Кармаликăв трактăрис Васильев трактăриспа ăмăртса ĕçлет. Вăл малтанхи кун норма тăрăх 4,60 гектар сухалас вырăнне 5,45 гектар сухаласа, нормăна 120 процент тултарнă. Апрелĕн 16-мĕшĕнче Кармаликăв трактăрис 5,69 гектар, тепĕр кунне 7,45 гектар сухаласа нормăна 153 процент тултарнă. Кунна пĕрлех 22 литр краççин перекетленĕ.

Апрелĕн 19-мĕшĕ тĕлне Павлăв трактăрис бригади пурĕ 65,9 гектар сухаланă.

Ф. Майков.

25 çын вĕренсе тухрĕç

ТРАК. Çак кунсенче махоркă тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звеносен звеновочĕсем хатĕрлекен районри курсран 25 çын, вăл шутран икĕ хĕрарăм вĕренсе тухрĕç. Халĕ курсран вĕренсе тухакансем махоркă лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлеме хăйсен колхозĕсене саланчĕç.

М. Иванов.

1938 çулхи çуракки

Йединоличниксем колхоза кĕреççĕ

** ЙЕРМОШКĂРИ (Вăрнар р.) Калинин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем тӳрĕ ĕçлекен йединоличниксене колхоза хутшăнтарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Çак кунсенче вĕсем 3 йединоличник хуçалăхне колхоза кĕртрĕç. Çавăн пекех Манйалти „Трактăр" колхоза та 2 хуçалăх çĕнĕрен хутшăннă.

А. Владимирăв.

** ТУРХАНТИ (Ишлей р.) „Çĕнĕ хунав" колхоз çуракине тухма хатĕр тăрать. Бригадăсенче уйра çĕр пиçсе çитнине сăнаса тăраççĕ. Тĕштырă вăрлăхĕсене, çĕрулмине йаровизацилеме хунă. Колхоза кĕмесĕр йулнă йединоличниксем колхозра ĕç пуйан та культурлă пурнăç тума пулнине тĕплĕн ăнланса илчĕç. Çавна май çак иртнĕ кунсенче колхоза çĕнĕрен 5 хуçалăх хутшăнчĕç. Вĕсем халĕ бригадăсенче хĕрсех ĕçе тытăнчĕç.

П. Йершов.

** МАТШУРИ (Шăхасан р.) „Çамрăк колхозник" колхоз çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕ колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренессине лайăх йĕркеленĕ. Вĕсем Положенисем çинчен ăнлантарса панипе пĕрлех йединоличниксене колхоза кĕртес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. Çавна май халĕ йединоличниксем 6 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

Н. Йакăвлĕв. В. Веçелов.

** УЙКАС ЙУНТАПА (Трак р.) йалĕнчи йединоличниксем çак кунсенче 6 хуçалăх 14 йедакпа колхоза кĕрсе, туртăм вăйĕсене, вăрлăхсене пĕрлештерчĕç. Халĕ вĕсем ĕçре ăмăртса ĕçлеççĕ.

Н. Илйин.

Парти пурнăçĕ

Отчотпа суйлав пухăвĕсене большевикла ирттерер

Апрелĕн 14-мĕшне 25-мĕш хушшинче ПСК(б)П Шупашкар райкомĕ пур парторганизацисенче те ПСК(б)П Тĕпкомĕн партин йĕртсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен йышăннă постановленийĕ инструкцийĕ çинчен тата парти райкомĕн отчотне сÿтсе йавмали пухусем туса иртерет. Парти пуçламăш организацийĕсен отчотпа суйлав пухăвĕсем апрелĕн 26-мĕшне майăн 2-мĕш хушшинче пулса иртеççĕ. Çапла вара, коммуниссене пурне те парти райкомĕпе парторгсен отчочĕсене васкамасăр, пур йĕнчен те тĕплĕн сÿтсе йавма май пулат.

Апрелĕн 19-мĕшĕнче парти райкомĕ çумĕнчи парти пуçламăш организацинче тăракан коммуниссен пухăвĕ пулса иртрĕ. Çав пухурах ПСК(б)П Тĕпкомĕ партин йĕртсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртерессин çинчен йышăннă постановленийĕ инструкцийе сÿтсе йавнă. Иккĕмĕш ыйтăва парти райком секретарĕ Малютин йулташ парти райкомĕн çулталăк хушшинчи ĕçĕсем çинчен отчот туса пачĕ.

Пухăва парти членĕсемпе кандидатсем пурте вăхăтра çитнĕ, пропагандис Иванов йулташ çеç кайа йулса пычĕ.

Райком отчочĕ хыççăн пĕр самантлăха пуху шăп ларчĕ. Докладчике икĕ ыйту çеç пачĕç, вăл ыйтусем: коллективизаци ÿсĕмĕ çинчен, тепри сочувствуйупчисемпе парти райкомĕ мĕнле ĕçлени çинчен. Райком отчочĕ тăрăх урăх ыйтусем пулмарĕç.

ПСК(б)П райком отчочĕ хыççăн пренире 13 коммунис тухса каларĕç. Пуху председателĕн темиçе хутчен те пухура ларакансенчен—кам тухса калаçас текен пур?—тесе ыйтмала пулчĕ.

Тÿрĕх калас, пулат, тухса калаçакан йулташсем райком ĕçĕ тăрăх критикăпа самокритикăна большевикла хăйулăхпа сарса пымарĕç. Çав вăхăтрах райкомăн ĕçĕнче ситменлĕхсем чылай пулнă. Паллах, пренире тухса калаçнă йулташсем райком ĕçне критикиемесĕр иртсе каймарĕç, анчах вăл питĕ ситĕлĕксĕр пулчĕ. Пренире тухса калаçнă Анисимăв, Филаретăв, Галинăв, Сергейĕв, Сергейĕвă, Александрăв, Караущĕв, Воинăв, Абрамăв, Никитин, Илларионăв, Сперанский йулташсем парти райкомне ытларах политикăла ĕçе хуçалăхлă ĕçсемпе таччăн сыхăнтарса пыманшăн, инструктăрсемпе кирлĕ таран йĕртсе пыманшăн, сочувствуйупчисем хушшинчи ĕçе чĕртсе йаманшăн, пропагандиссемпе семинарсем иртерменшĕн, комсомола йĕртсе пырассине ситĕлĕксĕр туса пынăшăн критиклерĕç. Унтан МТС, Хатĕрлев Комиссариачĕн ф-ри Уполномоченнăйне, райсутĕç пайне критиклене хыççăн виç-тăват сăмахпа тырпул тухăçлăхне хăпартас, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен каласа хăварчĕç. Паллах çакнашкал критикă парти райкомăн ĕçне йусама, хăйĕн ĕçне çÿлĕ пусăма лартма сахал пулăшат.

ПСК(б)П райкомĕн çак иртнĕ пухура пулнă ситменлĕхе малашне тумала мар. Парти райкомĕпе парторгсен отчочĕсене сÿтсе йавнă чухне клас сисĕмлĕхне вăйлатасси çинчен, троцкисла-бухаринла кайашсем, буржуалă националиссем тунă сăтăрла ĕçсен сийенĕсене пĕтересси мĕнле пулса пыни çинчен, Парти Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕ йышăннă решенийе пурнăçласа пыни çинчен, парти йышне ÿстерессн çинчен, коммуниссене большевисăмпа хĕçпăшаллатасси çинчен, ĕçре хăйсем пултарулăхĕсене кăтартнă йулташсене йĕртсе пыракан вырăнсене лартасси, РСФСР, ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрлесси мĕнле пыни, большевикла çуракине ăнăçлăн иртересси, хуçалăхпа политикăла кампанисен плапĕсене пурнăçлас ыйтусем отчотсенче тĕп вырăн йышăнмала.

Парти Шупашкар райкомĕ, критикăпа самокритикăна анлăн сарса, пырса отчотпа суйлав пухăвĕсене партилĕ-политикăлă ĕçсене вăйлатассипе сыхăнтарса иртерессе шанатпăр.

Н. С.

ÇИТМЕНЛĔХСЕНЕ ÇИВĔЧ ТИШКĔРСЕ, ТАТĂКЛĂ СĔНŸСЕМ ПАЧĔÇ

КУСЛАВККА. ПСК(б)П райкомĕ çумĕнчи пуçламăш организацинче отчотпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху хăйне пысăк организацилĕхпе пуçанса иртерчĕ.

Парторг хăйĕн отчотĕнче докладĕнче уйрăм коммуниссен политикăла активлăхĕ ÿссе пынине кăтартрĕ, агитацине пропаганда ĕçĕ тата организаци ĕçри çитменлĕхсемпе йăнăшсем çинчен каласа пачĕ.

ПСК(б)П райкомĕ çумĕнчи пуçламăш парторганизацин пур ĕçре те лайăх тĕслĕхсем кăтартмала. Анчах ĕçре апла мар. Иртнĕ суйлав пухăвĕнчен пуçласа 15 пуху çеç иртерне. Парторг пухусене иртерме начар хатĕрленет, терĕ. Çавăнпа ĕнтĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраль-мартри пленум решенине сÿтсе йавмали пухăва коммуниссем 53 процент çеç пынă.

Пухăвăн кун йĕркине, çавăн пекех пуху пулассине те, пуху пулмали кун çеç пĕлтерессĕ. Пухăва хатĕрленсе иртерес ĕçе организацилемен, терĕ Огурцов йулташ. Хăшпĕр коммуниссем йĕнчен партин дисциплинине пăснисем пулнă. Парти членĕ Йарухин висĕ уйăхшăн членские укçи тÿлемен, ăна уншăн выговор панă. Федосейев парти кружокне вĕренме çÿремест.

Парторг Липатăв йулташ хăйне панă вăхăтра пĕтĕм ĕçсем çинчен те, кĕскен калама тăрăшса „лайăх ĕçлекенсем те пур“ тенипе иртерсе йачĕ. Мĕншĕн çак пухурах уйрăм коммуниссен ĕçри лайăх тĕслĕхсене тĕплĕн каласа кăтартмалла марчĕ-ха.

Тухса калакансем ĕçри çитменлĕхсене сивĕччĕн тишкĕрсе, татăкла сĕнÿсем пачĕç.

—Пухусене хатĕрленмесĕр иртерне. Çавăнпа та иртнĕ пухусем коммуниссен пĕлÿне ÿстерме пулăшайман. Коммуниссен пĕлÿне, культурлăхне ÿстерес, вĕсемпе илемлĕ литература вулас ĕçе организацилемен, терĕ. Пирĕн ытти пуçламăш организацисенчи коммуниссене лайăх тĕслĕхсем кăтартмала, тет Антонăв йулташ.

Пуху парторганизаци çитĕлĕклĕ ĕçленĕ, терĕ. Парторгăн отчотпа докладчĕ тăрăх пуху татăклă решени йышăнсан, суйлав ĕçне тытăнчĕ.

Пуçламăш организацинче парти членĕсем 18 çын, кандидатсем 4 çын. Анчах апла пулин те пуху парти организатăрне çеç суйласа хăварса, йăнăш турĕ.

Ку йăнăша тÿрлетмелле.

Н. Петров.

Коммуниссем колхоз производствинче активлă ĕçлеççĕ

Çăлпусĕнчи Кирав йачĕпе тăракан колхозра (Тăвай р.) парти членĕсем 2, кандидатсем 4. Коммуниссем пурте колхозри ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Колхоз çулран çулах пысăк ÿсĕмсем туса пырат, халĕ Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выстăвкинче пулма зайавка панă.

Колхоз председателне Й. Романăв йулташа, нумайах та пулмаст, кандидатран парти членне куçарнă. Председателĕн заместителĕнче ватă колхозник (вăл парти кандидачĕ) Антонăв ĕçлет. Парти кандидатне А. Алексейĕвăна 4-мĕш бригадăри пахча-çимĕç ĕçĕн звеноводне суйланă. Вăл тата ку бригадăри стена хаçачĕн редакторĕ пулса ĕçлет.

Колхоз кăçал Вăрманхĕрринчи „Хĕрлĕ Сормова“ колхозпа ăмăртса ĕçлет. Коммуниссемпе комсомолецсем—ăмăрту ĕçĕнчи чăн-чăн организатăрсем. Колхоз çуракине лайăх хатĕрленсе çитнĕ. Çуракинче массăлă ăнлантару ĕçĕсене туса пыма, социалисăмла ăмăрту ĕçне организацилеме кашни бригадăна пĕрер коммунис тата пĕрер комсомолец çирĕплетнĕ. Колхозра вулав çурчĕ тата парткабинет пур.

Вăйлăн улшăнат колхозла йалăн сăн-сăпачĕ. Колхозра ача çуратмали çурт уçнă, трахпункт тата ача йаслн пур. Пĕрле кĕме мунча туса лартнă. Çак ĕçсене пĕтĕмпех коммуниссем йĕртсе пынипе тунă.

Колхозра çак пысăк ĕçсене тунипе пĕрлех, коммуниссем хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстерсе пыраççĕ. Тимофейĕв, Романăв, Петров йулташсем ИМЗО-ра парти историне вĕренеççĕ. Романăв 6 темă тăрăх „хорошо“ паллăпа зачот панă. Кунсăр пуçне хĕлле колхозра колхоз активĕн политшкулĕ ĕçленĕ. Унтан 20 çын вĕренсе тухнă.

Т. Майорăв.

Коммунис-руководителсен ответлăхĕпе сисĕмлĕхне ÿстермеле

Çак кунсенче ПСК(б)П Патăрйел организацн активĕн районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху парти Чăваш Обкомĕн VI-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен сÿтсе йаврĕ. Ку ыйту тăрăх парти райкомĕн секретарĕ Чернов йулташ доклад туса пачĕ. Вăл Обком пленумĕн решенисенчен тухса тăракан ыйтусем районра мĕнле пурнăçланса пыни çинчен актива тĕплĕн каласа пачĕ. Государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарасси районра пит йулса пырат. Кăçал сĕт-çу хатĕрлес плана 13 процент, аш-какай — 19 процент кăна тултарнă, укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе район республикре 16-мĕш вырăна йышăннă. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ Иермолайĕв йулташ ĕçсем кайа йулнин сăлтавне „такамсем“ çине сулăнтарма пăхат.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес ĕç районра çителĕксĕр пулса пырат. Иртнĕ суйлав кампанинче ĕçленĕ кружоксемпе агитатăрсем халĕ нумайĕшĕ ĕçлемеççĕ. Хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем ку ĕçе йĕртсе пымаççĕ.

Партин йĕртсе пыракан органĕсен суйлавне иртерни политикăлă-массăлă, организацилĕ ĕçсене вăйлатмала, тăшмансене тата сăтăрла ĕçсен йулăшкисене пĕтерсе пырас хастарлăха çĕклентермеле. Анчах çакна партин хăшпĕр пуçламăш организацисенче тивĕçлипе ăнланса илмен. Вĕсем, парти Тĕпкомĕн йанварти пленумĕн решенисене тĕрĕс ăнланмасăр, тăшмансен сăтăрла ĕçсен йулăшкисемпе кĕрешес ĕçе вăйсăрлатни палăрат. Акă, районри сĕрĕс пайĕ çумĕнчи пуçламăш парторганизаци выльăх-чĕрлĕхсене ăратлатас тата пусуçаврăнăшĕ тĕлĕшпе пулнă сăтăрла пăтраштарусене тÿрлетес тĕлĕшпе нимĕн те тумаст. Çавнашкалах райĕçтăвком çумĕнчи пуçламăш парторганизаци те сăтăрла ĕçсен йулăшкисене пĕтерсе пырас тĕлĕшпе начар ĕçлет.

Пухура тухса калаçнă йулташсем районри учрежденисенче ĕçлекен коммунис-руководителсен чылайĕшĕн ответлăхпа сисĕмлĕх çителĕксĕррине кăтартса пачĕç.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ О. Т. Харитонăвă йулташ райĕçтăвком пайĕсен пуçлăхĕсем ответлăха туйманни çинчен каларĕ.

Парти активĕн районри пухăвĕ парти Чăваш Обкомĕн VI-мĕш пленумĕн итогĕсене хĕрÿллĕн сÿтсе йавса, пленум решенисене пурнăçа кĕртме йышăнчĕ.

Ник. Пушкин.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Мускаври Л. М. Каганович йачĕпе тăракан савăтри комсомолец-стахановецсем (сулахайран): В. Светловă, М. Кузнецовă, М. Савоçкин тата Н. Филатăвă йулташсем.

Д. Фавилович фото-ÿкерчĕкĕнчен (Сойузфото).

Производствари çамрăксем хушшинчи ĕçе вăйлатмала

ПСÇЛКС Тĕпкомĕ çамрăксем хушшинче стахановла йухăм тата техникăна вĕренес ĕç мĕнле сарăлса пыни çинчен йышăннă решенийе савăтсемпе хапрăксенчи нумай пинлĕ çамрăксем сÿтсе йаврĕç. Вĕсем Тĕпком решенине сÿтсе йавнă май хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхĕсене те уçса палăртрĕç.

Пирĕн çамрăксене вальли çул уçă. Государствă вĕсене вĕрентет, йаланах пулăшса пырат. Кашни çамрăк пирĕн Сталинла Конституцире çырса хунă правасемпе усă курат.

Çамрăксене ĕçре, вĕренÿре тата ытти йĕнпе те пулăшса пырасси, воспитани парасси ленинла комсомолăн тĕп задачисенчен пĕрийĕ пулмала. Анчах нумай çĕрте çак ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ-ха. Комсомол организацисем хăшпĕр чухне çамрăксем хушшинче ĕçлессинчен пăрăнма хăтланаççĕ, çамрăксемпе таччăн çыхăнса ĕçлемеççĕ. Çавăн пирки те çамрăксем хушшинче стахановла йухăм та хăй тĕллĕн çеç сарăлса пырат. Акă, сăмахран, Çĕмĕрле комбинатĕнче 931 çамрăк шутланат, вăл шутран техникăна вĕренмели кружоксенче 463 çамрăк çеç вĕренеççĕ. Вĕренме çÿрессине çирĕп йĕркелемен пирки хăшпĕр чухне занятисене 85 процент çеç пыраççĕ. Кунта стахановецсем сахаллăн. Комсомол организацийĕ стахановла йухăма вăйлатассишĕн тăрăшса ĕçлени курăнмаст. Комсомолецсенчен 61 çын производствăра ĕçлеççĕ пулсан, стахановецсем 36 комсомолец кăна. Çакăнтан ĕнтĕ комсомолăн комбинатри организацийĕ стахановла йухăма сарса пырас ĕçре çителĕксĕр ĕçлени лайăххах курăнат.

Канашри вакунсем йусакан савăтри комсомол комитечĕ çамрăксем хушшинче стахановла йухăм тата техникăна вĕренес ĕç мĕнле пыни çинчен Тĕпком решенине сÿтсе йавнă хыççăн Улатăрти паравуссем йусакан савăтри комсомол организацине ăмăртăва чĕнчĕ. Халĕ цехсенче пĕр-пĕрин опычĕсемпе паллашас тĕлĕшпе производствăлă канашлусем туса иртереççĕ. Анчах стахановла йухăм çителĕклĕ сарăлса пырат теме çук-ха. Производствăра ĕçлекен 113 комсомолецран стахановецсем 48 çын кăна. Çавăн пекех комсомолта тăман çамрăксенчен те стахановецсем сахал, 500 çынтан, — стахановецсем 162 çын кăна. Техникăна вĕренмели шкулсенче 22 çын, каçхине вĕренмели производствă шкулĕсенче 97 çын тата вăтам шкулсенче 83 çын çеç вĕренеççĕ.

Комсомол организацийĕ кашни çамрăка пĕлменни, унпа ĕçлеменни стахановла йухăма сарма чăрмантарат. Акă, иртнĕ çулсенче Тарасăв комсомолец йĕртсе пыракан бригадă йаланах плана тултарса ĕçленĕ, халĕхи вăхăтра материалсем çителĕклĕ паман пирки плана 75—80 процент çеç тултарса пырат.

ПСÇЛКС Тĕпком решенине Улатăрти чукунçул станци çумĕнчи комсомолецсем те сÿтсе йавнă. Кунта ĕç чылайах лайăхланни курăнат. Техникăна вĕренес ĕçе йĕркеленĕ: Кузнецовпа Шангин комсомолецсем машинис йатне илме хăйсем тĕллĕн вĕренсе екзамĕн параççĕ. Чылай комсомолецсене ответлă вырăнсене куçарнă. Кочегар пулнă А. Здродăв йулташ халĕ машинис пулса ĕçлет, Г. Кочетков — инструментальнăй цехра бригадирта ĕçлет. Унăн бригадинче ĕçлекенсем пурте стахановецсем, бригадă йаланах плана 150 процент тултарат. Естафетнăй пуйăс çинче машинис пулса ĕçлекен Серйожă Кузнецов Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарас умĕн хăйĕн пуйăсне 2030 тоннă тийесе нормăпа кăтартнинчен пĕр сехет те 15 минут малтан илсе çитерне.

Чукунçул станцинче пĕтĕмпе 450 çамрăк ĕçлет, вĕсенчен 110-шĕ техникăлă кружоксенче вĕренеççĕ. Комсомолецсенчен 35-шĕ стахановецсем шутланаççĕ, 120 комсомолец ăмăртса ĕçлеççĕ.

Республикăри ытти предприйатисенче те çак йулашки вăхăтра ответлă вырăнсене лартнă комсомолецсем пысăк хастарлăхпа ĕçлесе пыраççĕ. Акă, Шупашкарти спирт савăтĕнчи А. Артемийĕвă, Йе. Хмара йулташсем халĕхи вăхăтра цех начальникĕсем пулса ĕçлеççĕ, Деткомиççи хапрăкĕнчи стахановец станочник пулса ĕçленĕ Константинăв йулташ йанвар уйăхĕнченпе хапрăкра техникăлă директăр пулса ĕçлет т. ыт. те.

ПСÇЛКС Тĕпком решенийĕ çамрăксем хушшинчи ĕçе тĕпренех лайăхлатмали майсене кăтартса парат. Комсомол организацисен çав решенийе пурнăçа кĕртессишĕн вăйлăн кĕрешмеле.

Клементйĕвă.

Йалсоветчĕн секцисем

МАН-СЕНТЕР, (хамăр корр.). Виктăр Алексейĕвич Кольцов йулташ колхозри активис пулнă. ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн суйлавĕ вăхăтĕнче вăл агитатăр пулса тата Пашалукас участкинчи суйлав комиççи секретарĕнче ĕçленĕ. Пашалукас йалсовет председателĕ Орлов йулташ района куçсан, Кольцов йулташа 1938 çулти февралĕн 3-мĕшĕнче йалсовет председателне суйланă.

Кольцов йулташ йалсовет ĕçне актива, секци руководителĕсемпе членĕсене хутшăнтармасан, ĕçе ăнăçулă тума çуккине лайăх пĕлнĕ. Çавăнпа та вăл чи малтан секци руководителĕсемпе членĕсене хăй тавра пуçтарса, вĕсен ĕçĕсене лайăхлатма тăрăшрĕ. Кольцов йулташ тăрăшни сайа каймарĕ. Халĕ секцисен ĕçĕсем чылай малала карĕç.

Финанс секцине йалти активис Леонтйĕв йулташ йĕртсе пырат. Тутаркас районĕнче лайăх ĕçлекен секцисем сахал мар, анчах займ укçине, обйазательнăй тÿлевсене йалтах пухса пĕтернисем сахал.

Родион Иванов йулташ — çулйĕрпе сыхăну секцин руководителĕ. Вăл йĕртсе пынипе „Майăн 1-мĕшĕ“ колхозри çулйĕр бригади çак кунсенче 10 метр тăршшĕ çĕнĕ кĕпер туса пĕтерчĕ, шыв сĕмĕрсе кайнă çулсене пурне те йусаса йĕркене кĕртрĕ. Иванов йулташ — колхозри агитатăр. Вăл колхозниксене РСФСР тата ЧАССР суйлав Положенисене вĕрентет, хаçат-журналсем вуласа парат. Секци членĕсем Н. Петровскипе И. Васильйĕв йулташсем те агитатăрсем пулса ĕçлеççĕ.

РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсемпе суйлав Положенийĕсене вĕренме йалсоветĕнче 16 кружок организациленĕ, вĕсенче суйлавçăсем 277 çын вĕренеççĕ.

Йалсовечĕ активиссене ÿстерет, вĕсене кулленхи ĕçе хутшăнтарат, ĕçре кăтартса, вĕрентсе пырат. Çак кунсенче май уйăхне хатĕрленес ыйту тăрăх йалсовет пленумĕ пулчĕ. Пленумра иртнĕ суйлавра активлă хутшăнса ĕçленĕ активиссем те чылай пулчĕç. Вĕсем уйăва пысăк çитĕнÿсемпе кĕтес илме сăмах пачĕç.

Йалсовет активĕ халĕ хăйĕн умне çакăн пек задачă лартрĕ:—государствăна аш-какай тăратассин 1938 çулхи 2-мĕш квартăл планне çак кунсенчех тултармала. Йалсоветри актив тăрăшса ĕçлет, ку ĕçре те ÿсĕм тăвасси шанчăклă.

Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене пăхса тухни

Йулашки вăхăтра Китай çарĕсем пысăк çĕнтерÿсем тăваççĕ. Шаньдун провинцинчи çурçĕр фронтĕнче пысăк çĕнтерÿ турĕç. Тайерчжуан патĕнчи вăйлă çапăçура Китай çарĕсем Йапонин икĕ дивизине çĕмĕрсе тăкнă. Йапонецсен вилнисемпе аманнисем 20 пин çынна йахăн. Китай çарĕсем йапонецсенчен 20 пин çĕкĕ, 93 пулемет, 77 тупă тата ытти çар хатĕрĕсене нумай туртса илнĕ.

Паллах ĕнтĕ, çурçĕрти фронтри лару-тăру ун пек тĕп фронтри ĕçсене те улăштарма пултарнă, унта Китайăн регулярлă çарĕсем çеç мар, партизансен отрйачĕсем те Йапони çарĕсене хирĕç хаяррăн çапăçма тытăннă.

Йапонецсене пассивлă хирĕç тăрас тактикăна пăрахса, активлă оборонă çине куçни, урăхла каласан, йапони захватчиксене хирĕç кĕрешме партизанла кĕрешÿне анлăн усă курса, контрнаступлени тăвасси çине куçни Китай командованине пысăк çĕнтерÿсем тума май парат.

Йапони генеральнăй штабĕ Китайра хăвăрт тата татăклă çĕнтерÿ тума шутласа хунине тахçанах сирсе пăрахнă. Китай халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхне, никама пăхăнса тăманлăхне сыхласа хăварма паттăр кĕрешĕве тухрĕ, капиталисăмлă тĕнче умне вăл унăн Йапони империалисăмĕ хирĕç тăма паттăрлăх хăватлăх тенĕн чухлĕ пуррине кăтартакан гигант пек тухса тăчĕ.

Йапони хĕçпăшалне никам та çĕнтерме пултараймаст“ тата Китай халăхĕн патриотисăм çук, текен йумаха ĕмĕрлĕхех сирсе пăрахнă. Инçет-Хĕвелтухăçне лайăх пĕлекен, Англири „Гонконг дейли пресс“ хаçатăн редакторĕ пулнă Баррет Желтай йухаппыв çинчи çапăçусене пĕрлештерсе çакăн пек вывăд тăват: 1) Йапони хĕçпăшалне никам çĕнтерейме пултараймаст, тенĕ йумаха сирсе йанă, 2) Китай хĕçпăшаллă вăй тĕлĕшĕнчен хăватсăр, тенĕ йумаха пĕтерне, 3) Китай çарĕсемпе халăхсем нихçанхинчен те çирĕп, 4) Йапони Китайа çăмăллăнах çĕнтерме шутлани саланса карĕ: Йапоние хирĕç Китайри пĕтĕм халăх татăклăн тăрат.

„Факт çапла, халĕ ĕнтĕ Китай ăна çаратма тата намăслантарма йуракан нимĕн вăйсăр, пулăшусăр çĕршыв мар. Китай халăхĕ вăранат, хăйĕн вăйне тăрăнăн ăнланма тытăнат“ тесе пĕтерет хăйĕн статйине Баррет.

**

Китайри ĕçсем агрессăрсем хăйсене епĕр çав тери вăйлă тесе шутлама хăтланнă пек вăйлă маррине йар уççăн кăтартса параççĕ. Халĕ Китай çарĕсем Йапони çарĕсене çĕнтерни Англи Йапони тĕлĕшĕпе тытса пыракан позицине улăштарнипе пĕрле пулчĕ. Йапони империалисăмĕ пит те йавăр лару-тăрура. „Çĕнтерÿлĕн малала кайни“ çинчен çырнисем çар сводкисенчен тухса укнĕ. Йапонин финанс тата економикăлă хуçалăх питĕ йăвăрланса çитнĕ. Çак вăхăтра Лондонри (Англи) банкирсем Йапони империалисĕсене пулăшма васкаççĕ, Йапони валютин хакне йĕркелĕ вис̧ере тытса тăма Йапони банкĕсемпе килĕшÿ тунă.

Англин халăхи правителстви—агрессăрсене витсе усракан правителствă. Китайра вăл Йапони империалисăмне чарма мар, урăхла, Йапони çĕнтерсен, унпа хăйне усăлă килĕшÿ тума шутласа, Йапонийе нумай чухне пулăшат. Англи Гитлĕр Австрине туртса илнине йышăнат, Германипе Италин Испанири интервенцине пулăшат. Италипе килĕшÿ тăват.

Англи буржуазийĕ хăйĕн класлă интересĕсене шута илсе, фашисла çĕршывсенчи халăх çав тискер режима çĕмĕрсе тăкассинчен хăрат, иртĕнсе кайнă фашисла диктатăрсене çăлса хăварма тăрăшат. Тепĕр йĕнчен Англи буржуазийĕ çакна та лайăх пĕлет: Фашисла çĕршывсем тĕнчене тепĕр хут пайласшăн вăрçа хатĕрленеççĕ пулсан, ку чи малтан Англишĕн хăйĕншĕн питĕ хăрушă пулат, мĕншĕн тесен унăн аллинче пуринчен ытла колонисем, çаратса йулнă пуйанлăх нумай. Çав колонисемпе пуйанлăх çине фашисла агрессăрсем питĕ выçă куçпа пăхаççĕ, вĕсене туртса илме çунаççĕ. Англи буржуазийĕ миршĕн тăракан державăсемпе сойузлă пулса, мирлĕ саманана сыхласа хăварас вырăнне, йутçĕршывсене туртса илесшĕн çунакан фашисла государствăсемпе килĕшÿ тума, вĕсене ытти çĕршывсем çине ĕçлетсе йама хăтланат. Агрессăрсене пулăшни вĕсене хăйсен тискер ĕçне тума ирĕк панни Англишĕн хăйĕншĕнех питĕ хăрушă пулнине никама та каласа ĕнентерме кирлĕ мар, ăна пурте пĕлеççĕ.

**

Австрине хĕçпăшаллă вăйпа туртса илни „саккунлă тата йĕркелĕ пулнине“ кăтартма Германи фашисĕсем тунă „плебисцит“ комедийĕ пĕтрĕ. „Плебисцит“ Австри тата Германи халăхĕсен ирĕклĕхĕнчен çав тери тискерĕн мăшкăланине кăтартрĕ. Çак мăшкăллă ĕç Германи фашисăмĕ никама пăхăнса тăман Австри государствине пĕтерсе хунă фактна çеç танашма пултарат.

Штыкпа хăратса, террор тискерĕн алхасса кайнă лару-тăрура Германипе Австри суйлавçисене Австрине Германи çумне çирĕплетнишĕн, „аслă Германин рейхстагне“ суйлама тăратнă кандидатсен спискищĕн сасăлама приказ панă. Спискăран çак кунсткамерте кам ларме пултарнине Гитлĕр хăй суйласа илет.

„Плебисцит“ — çĕршыври халăхсен „шухăшне“ çĕклемели, шовинисăмăн пăтранчăк хумне çĕклемели май çеç мар. Çавăн пекех вăл йутçĕршывсене туртса илекенсене никам чарманнине кăтартни, йутçĕршывсене туртса илмели çĕнĕ программă пулат. Австрине туртса илни çитмест-ха. Çĕнĕ рейхстагăн „депутатсен“ составĕ çине пăхăр-ха, есĕр вара программăра Чехословакине, Çурçĕр Шлезвиге, Германипе сойузлă Польшăна та, тата... Францине туртса илме палăртнине куратăр.

Германи фашисăмне центăрти Йевропăра çирĕплентерме май парса, Британи дипломатийĕ чи малтан хăйĕн сойузникĕшĕн—Францишĕн пысăк хăрушăлăх туса хурат. Франци çине Германи тапăнас мĕн пулсан, вăл Польшă, Чехословаки, Румыни, Йугослави çĕршывĕсем çине шаннă. Анчах Францишĕн хăрушăлăх тата вăл—Англишĕн хăйĕншĕнех хăрушă. Йулашкинчен, Австрине туртса илни Çывăхри Хĕвелтухăçне, Вăтаçĕр тинĕсне тухма çул уçса парат. Вăтаçĕр тинĕсĕнче Англине хирĕç Итали тăрат.

Кусем чечексем çеç-ха — улмисем малта, мĕншĕн тесен Германи фашисĕсем хăйсене колони пама ыйтма пăрахман, çитменнине вĕсене Англин пуйан колонийĕсем питĕ кăмăла кайаççĕ.

**

Англи интервентсене Испанине хирĕç вăрçма пур майсемпе те пулăшса пырат. Англин политики агрессăрсем йĕнне татăклăнах çаврăннă пирки, Испанири интервенци çапла вăйланса карĕ. Италипе Германи Испанине експедицилĕ корпус, артиллери, пулеметсем, танксем нумай йанине, çĕрпне самолйот йанине Англи правителствин пуçлăхĕ Чемберлен „сисмен“. Чемберлен хăй агрессăрсем умĕнче пуç тайнине Итали çарĕсене Испанирен илсе тухма Муссолинирен килĕшÿ илтĕм тенипе витсе хума хăтланнă. Чемберлен Франко генерал часах çĕнтересе шанса тăнă, Муссолини хăйĕн çарĕсене Франко генерал йăлтах çĕнтерне хыççăн çеç, Итали Абиссинине туртса илнине Лигă Наципе йышăнтарнă хыççăн çеç хăйĕн çарне Испанирен илсе тухассн çинчен сийелтен сăмах панă, анчах пĕтĕм çарне илсе тухасси çинчен нимĕн те, каламан.

Анчах Испани халăхĕ Чемберлен армине çине шыв йухтарасшăн мар. Испани республикăлă правителствине çар хатĕрĕсем илме чарнă пулсан та, Испани халăхĕ интервентсене хирĕç пĕтĕм вăйхалхурса çапăçат. Испани халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăйне мобилизацилет, кĕрешме пăрахма шутламаст.

Испанири кĕрешÿ пĕтмен-ха. Вăл тата ытларах сарăлса кайсан, тата ытлара йун йухтармала пулсан, темиçе вунă пин çын виллĕшĕн фашисла интервентсем тата вĕсене пулăшакансем ответлă пулаççĕ.

**

„Хутшăнмала мар“ йĕнче тăракансен йаланах пирĕн политикă Йевропăри тата пĕтĕм тĕнчери вăрçă пуçланса кайассин сирет, тесе çирĕплетнĕ. Испани ĕçĕсен хутшăнмасăр, урăхла каласан интервентсене чăрмантармасăр, епĕр Испанири вăрçăна Йевропăна куçма чаратпăр, тесе каланă вĕсем.

Çакнашкал калани ултавлă тата иккĕлĕ пулнине пурнăç лайăх кăтартса пачĕ. Австрине туртса илни, Чехословаки çине хăрушăлăх тухса тăни, Польшă Литвăна ультиматум пани — агрессăрсем мĕнле вăрçă пуçлама хăтланнине лайăх кăтартса парат.

Агрессăрсене „хутшăнмасăр“ тăракансем“ мар, вăрçă пуçлакансене хирĕç кĕрешекен халăхсем чараççĕ. Татăклă вăхăтра чи çивĕч, чи татăклă сăмаха лайăх массисем калĕç.

Виктăрăв.

Çĕрĕç пайĕ выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре йертсе пымасть

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе Тăвай районĕнче хисепе хумаççĕ. Çавăнпа район государствăн пана выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана тултарман.

Кармалти „Комсомолĕц" колхозра лашисем начар. Акана тухса кайрăмăр. Лашисене халĕ те вăйлă апат çине тăратман. Çавăн пекех сысна витинче те йĕркесĕрлĕхсем пит нумай. Витере вăлашкасем çук.

Амалăхри „Горьковская Коммуна" колхозра ĕне фермин пуçлăхĕ пулса Йевграфăв 1938 çулхи йанвар уйăхĕнчен пуçласа ĕçлет. Вăл ĕçлесшĕн тăрăшать, анчах колхоз правленийĕ ăна нимĕнле пулăшу та памасть. Вăл кĕнĕ чухне фермăра 84 пуç ĕне пулнă, пайанхи куна 103 пуç шутланать (кунта пăрусем те кĕреççĕ). Кăçал ĕне фермине валљи 13 капан утă уйăрнă, çуркунне валљи 5 капан уйăрса хăварнă пулнă. Халĕ колхоз правленийĕ виçĕ капанне туртса илнĕ. Фермăра шыв ăшăтма вут та çук. Кăçал колхоз правленийĕ виçĕ лав кăна вутă панă. Пăрусене сĕт памали вăлашкасем те çĕмрĕк. Колхоз правленийĕнче ĕçлекенсем фермăна пырса та пăхмаççĕ. Халĕ тата 23 тыха витере чĕркуççи таран шыв çинче тăраççĕ. Кунта 1935 çултах МТФ валљи вите тума пуçланă. Анчах унăн урайне пайанхи куна та сарса пĕтермен. Урай вырăнне кашни çулах кӳрăс хуппи сарса нумай укçа тенкĕ расхутлаççĕ. Вăл расхутсене шутласан, темиçе урай та сарма пулнă пулĕччĕ. Кунсăр пуçне кирпĕчрен тунă вите тăррине витме тесе йăвăç та илчĕç, анчах пайанхи куна та витмеççĕ-ха.

Витере пĕчĕк ачасем ĕçлеççĕ. Вĕсем пĕррехинче лашасене виçĕ кун шăварман, вара трук шыв ĕçтерĕ пирки пĕр кĕсре хăм пăрахнă.

Çавнашкалах Тăвайĕнчи Шмидт йачĕпе тăракан колхозра та выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе нимĕн вырăнне те хумаççĕ. Пайанхи куна виçĕ вите тăррине витмен. Фермă пуçлăхĕ Павлăвă нимĕн тума аптăрать. Вăл халĕ ĕнесене, вăкăрсене пăхать. Ун патне тепĕр çын кирлĕ, анчах колхоз председателĕ „çыран çын тупса паратпăр" тесе лăплантарса çеç пурăнать.

Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем çавăн пек фактсене курмаççĕ. Аслă зоотехник Лаврентйĕв йулташ кăçал мĕн пурĕ те 4 колхоза çеç çитсе курнă.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес, вĕсене пăхас çĕрте чăрмантаракансене ответ тыттарас çĕрте райçĕрĕçпайĕ хăй те чăрмантарса пырать. Акă пĕр тĕслĕх: Амалăхра 1937 çулта икĕ лашана суккăр турĕç. Çакăн çинчен çийĕнчех акт çырса, райçĕрĕç пай пуçлăхĕн заместителне Ахтамăв йулташа панă пулнă, вăл ăç ахалех пĕтсе ларчĕ.

Районра выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен колхозсем те пур. Анчах вĕсен опычĕсене урăх колхозсем çине куçармаççĕ.

Çăлпуçĕнчи Кирăв йачĕпе тăракан колхозăн аратлă сысна фермине примĕр илмеле. Унта ĕçлекенсем халĕ районри пур выљăх-чĕрлĕх ĕçĕпе ĕçлекенсене социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕç. Кунти сысна фермин пуçлăхĕ Васильĕв фермăра кăçал сыснасен хисепне 800 пуçа çитерме пулнă. Çак пахă тĕслĕхсем ытти çĕрте те пур. Райçĕрĕç пайĕн малта калана çитменлĕхсене пĕтерсе ку ĕçре тивĕçлипе йертсе пымала.

Шупашкар май уйавне хатĕрленет

ПСК(б)П хула комитечĕпе хула совечĕ май уйавне хатĕрленсе иртерес ĕçе йертсе пыма комиссии организациленĕ. Комисси çирĕплетнĕ план тăрăх, Шупашкар хулинче май уйавне хатĕрленес ĕç саралсах пырать. Май уйавне хатĕрленсе иртерессин тĕп задачисем — ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕ йышăннă решенисене вĕренесси тата вĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесси, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленесси, ĕçсынписем хушшинче политикăлă тата интернационаллă воспитанине малала та вăйлатса пырасси, ĕçре социалисăмлă ăмăртăва татах та вăйлатасси пулса тăраççĕ. Хула комиссин планĕ тăрăх çакăн пек конкретлă ĕçсем пулса иртмеле:

Апрелĕн 13-мĕшне 23-мĕш хушшинче предприйатисенче, учрежденисенче, шкулсенче тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕпе тата майăн пĕрремĕшĕ çинчен калаçусем тата хаçат-журналсем вуласа парассине организацилемеле. Апрелĕн 29-мĕшĕнче мĕн пур предприйатисенче, учрежденисенче, шкулсенче ĕç пĕтнĕ хыççăн, кĕске митингсем пулса иртмеле. Каçхине строителсен клубĕнче хуларн çамрăксен вечĕрĕ пулать.

Апрелĕн 30-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Государствă театрĕнче, строителсен клубĕнче, кинотеатрта, йалхуçалăх институтĕнче, Хресчен çуртĕнче, пионерсен çуртĕнче чаплă ларусем пулаççĕ. Чаплă ларусем хушшинчи хыççăн концертсемпе постановкăсем пулаççĕ.

Майăн пĕрремĕшĕнче 11 сехетре Хĕрлĕ площадре митинг-демонстраци пулать. Каçхине сатсенче, бульварта, урамсенче вăйăсем, ташăсем, выступленисем организацилеççĕ.

Площадĕ, урамсене, сатсене, уйрăм çуртсене илемлетес ĕçе лайăх организацилеççĕ. Хулана çакăн пек темăсемпе илемлетеççĕ: Хĕрлĕ площадри трибунăна интернационаллă темăпа илемлетеççĕ, унта Димитров, Тельман йулташсен портречĕсем пулаççĕ. Крупскайа йачĕпе тăракан сатра Испани тата Китай халăхĕсен паттăр кĕрешӳне кăтартса паракан плакатсемпе картинăсем пулаççĕ. „15 лет ЧАССР" сатра ССР Союзĕнчи халăхсен телейлĕ те савăнăçлă пурнăçне тата социалисăмлă ăмăртăвăн паттăрĕсене кăтартаççĕ. Çутĕç Халăх Комиссариачĕн çуртне—Чăваш халăхĕн культуралăхĕ ӳссе пынине кăтартакан плакатсемпе, диаграммăсемпе, картинăсемпе илемлетеççĕ. Почтă çуртне — ПСК(б)П — социалисăм çĕнтерӳне йертсе пыраканĕ, Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин йалавĕ айĕнче çĕнĕ çĕнтерӳсемшĕн — малала!—темăпа; кĕнерпе библиотекă çуртне — „Майăн пĕрремĕшĕ — телейлĕ, савăнăçлă ĕçсен праçникĕ" темăпа; Верховнăй суд çуртне—„фашисла çĕлен-калтасене, халăх тăшманĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерер, политикăлă сыхăлăха татах та вăйлатар, чаплă наркомвнутделĕçсене салам!"—темăпа; хула совечĕн çуртне—Сталинла Конституци, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне ăнăçлăн хатĕрленсе иртерес темăсемпе илемлетеççĕ.

Атăл хĕррине електричĕствă çуттипе тата тĕрлĕ тĕслĕ плакатсемпе, лозунгсемпе, диаграммăсемпе хитрелетеççĕ. Унсăр пуçне кинотеатра кинокартинăсен плакачĕсемпе, картинăсемпе паттăр папанинĕçсене, фотчиксене кăтартаççĕ. Хресчен çуртне — сурăкине ăнăçлăн иртерес тата виçĕ республикă ăмăртăвĕн темисемпе илемлетеççĕ.

Картинăсене, плакатсене, диаграммăсене, лозунгсене çырса хатĕрлеме „Художник" ортеле хушнă.

А. С.

Суйлава хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ

ВĂРМАР (хамăр корр.). Районра РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленес ĕçсем хĕрӳллĕн пыраççĕ. Суйлавçăсене шута илсе тухнă, районра 23.923 суйлавçă шутланать.

Парти, совет, профсоюз организацийĕсен тата агитатăрсен ĕçĕшнисене суйлав саккунне халăха пĕлтерес ĕçе вăй хурса ĕçлеççĕ. Районĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренме 226 кружок организациленĕ. Вăл кружоксенче пурĕ 239 заљати туса иртернĕ. Суйлава хатĕрленнĕ май пухусенче, вечерсенче калаçусем туса иртереççĕ.

Суйлав Положенисене ăнлантарса парассипе районра 497 агитатăр ĕçлет. Агитатăрсен шучĕ ӳссех пырать. Районри партин кабинечĕ çумĕнче организациленĕ 10 кунлăх курс урлă 62 çын вĕренсе кăларнă. Халĕ вĕсем вырăнсенче ĕçлеççĕ. Çак агитатăрсем хушшинче ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕне суйлава чухне агитатăр тата доверенăй пулса ĕçленисем те пур.

Шăхальчи Бариновский, Кип Мăнтăрти Архипăв, Çĕнĕ Кавалти Никифăрăв йулташсем ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлава чухне те агитатăрсем пулса ĕçленĕ, вĕсем халĕ те агитатăрсем. Хĕрлĕ Çар ретĕнче отделени командирĕ пулнă Ирахкин йулташ та киле таврăнсанах суйлав Положенине ăнлантарса пама тытăннă.

Районри вунă кунлăх курсран вĕренсе тухнă агитатăрсем йалсенчи агитатăрсене вĕрентсе, йертсе пыраççĕ, консультацисем параççĕ. Парти райкомĕ вĕсене валљи, суйлав Положенисене вĕреннĕ çĕрте усă курма „Спутник агитатора", „Пропагандист", „Блок-нот агитатора" çыранса панă.

Уйрăм агитатăрсем суйлавçăсем килĕсене çӳресе суйлав Положенине çинчен ăнлантарса параççĕ. Малтикасри „Вутлан" колхозри агитатăрсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем халăх пуххисене те суйлав Положенийĕ çинчен ик хут тухса калаçнă. Хăшпĕр агитатăрсене уйрăм участакăсем, килсем çумне çирĕплетнĕ. Участакăсенче 5—6 кил пайланă. Халĕ агитатăрсем килсене кайса суйлав Положенине вĕрентме тытăннă.

Райĕçтавком çумĕнче служащисене вĕрентме пĕр кружок, рабочисемпе техничисене вĕрентме пĕр кружок организациленĕ. Служащисене районри парти кабинечĕн пуçлăхĕ Силантьев йулташ вĕрентет. Кружоксенче икшер заљати туса иртернĕ. Заљатисем пысăк активлăхпа иртеççĕ. Кружокăн руководителĕсем РСФСР Верховнăй Советне суйламалли Положенине вĕрентмелли программа кăтартнă литературăсемпе пĕрлех географи карттине тата ытти литературăсемпе усă кураççĕ. Силантьев йулташ икĕ заљатинче те ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлава чухне коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ чаплă çĕнтерӳ тунине çинчен, капиталисла государствăсенчи „суйлавсем" мĕнле иртни çинчен каласа панă.

Колхозсенчи агитатăрсем час-часах районри парти кабинетне консультацие килеççĕ.

Т. Майорăв.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене пĕтермеле

Республикăра выљăх-чĕрлĕхсен хисепĕ ӳссех пырать. Çавăнпа пĕрлĕх ăратлă шултра выљăхсен шучĕ те хутшăнать.

Малта пыракан фермăсенчи стахановĕçсен опычĕсем кашни ĕнерен 1200 литр сĕт, кашни сыснаран 2.500 килограм аш-какай, кашни сурăхран 12 килограм çăм илме май пуррине кăтартса параççĕ. Акă, Йетĕрне районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхозри сĕт-çу фермин пуçлăхĕ Михайлăв йулташ 1937 çулта кашни сăвакан ĕнерен 2050-шер литр сĕт суса илнĕ. Фермă колхоза 28 пин тенкĕ тупăш панă. Тутаркас районĕнчи „Сеятель" колхозри сысна фермин пуçлăхĕ Андрейĕв йулташ иртнĕ çулта кашни сысна аминчен 23-шер çурă çитĕнтернĕ. „Çĕнĕ Пуянкă" (Тутаркас р.) колхозри сысна ферминче ĕçлекен Васикова йулташ „Фроçă" йатлă сысна аминчен 29 çурă çитĕнтернĕ. „Фроçă" йатлă сысна амине Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине йама палăртнă. Вăл халĕ 266 килограм туртать.

Анчах та, хăшпĕр колхозсенче çамрăк выљăхсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта Турхан, Йетĕрне районĕсенчи колхозсенче çамрăк выљăхсене лайăх пăхман пирки, вĕсем чылай вилсе пĕтнĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шупашкар Ĕçмĕлти колхозра çамрăк çурăсене пĕрне те пăхса çитĕнтереймен.

Кăçал выљăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене пĕтермеле. Выљăх-чĕрлĕхсене ăратлантарса çитерсе, вĕсенчен пысăк тупăш илессишĕн кĕрешмеле. Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри стахановĕçсен паха опычĕсене ытти колхозсене куçармала.

Г. Иванов.

Кашни пысăк хастарлăхпа

КӲКЕÇ. Чăкăр йалсоветне кĕрекен „Чăваш Коммунĕ" колхоз çумĕнчи вулав çурчĕ май уйавне хатĕрленет. Май уйавне хатĕрленсе иртермели плана туса çирĕплетнĕ ĕнтĕ. Колхозниксем хушшинче май уйавĕ çинчен докладсем туса параççĕ. Драмкружок „Айдар" пйесăна лартма хатĕрленет.

Й. Васильйĕв.

ÇĔРПӲ. Тупнерти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем май уйавне пысăк хастарлăхпа хатĕрленеççĕ. Май уйавĕ тĕлне шкула илемлетеççĕ, урамсене, шкул килкартине шăлса тасатаççĕ. Майăн пĕрремĕшĕнче шкулта вечĕр пулать. Шкул çумĕнчи драмкружок „Ĕмĕтлĕх" пйесăна лартса пама хатĕрленет. Çавăн пекех хор кружокĕ те çĕнĕ йурăсем вĕренет. Май уйавне хатĕрленсе иртерес ĕçе йертсе пыма комиссии организациленĕ.

Й. Иванĕшков.

Тула облаçĕнчи Птаљск МТС-ĕ трактăриссен курсне организациленĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Вĕренӳри отличницăсем А. Кузнецовăпа (сулахайра) В. Чушкинă ХТЗ трактăра вĕренеççĕ.

Н. Ховрачев фото-ӳкерчĕкĕнчен (Союзфото).

Агитатăрсене йертсе пымаççĕ

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене халăха тĕплĕн ăнлантарса парасси—пысăк ĕç. Вăл халљхи вăхăтра партипе совет тата профсойуз организацисен куллен-хи ĕçĕнче тĕп вырăнта пулмала.

Вăрнар районĕнче чылай çĕрте суйлав саккунне вĕрентес ĕçе йĕркеленĕ. Упнер, Çавалкас йалсоветĕсенче суйлав Положенисене пленум ларăвĕсенче сӳтсе-йавнă. Çакăн хыççăн, колхозсенче те суйлав саккунĕсене вĕренес ĕçе тивĕçлипе йĕркеленĕ. „Апнер" колхозра 6 кружок организациленĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем кружоксен заљатийĕсене сиктермесĕр çӳреççĕ.

Анчах хăшпĕр йалсоветĕсенче ĕçсем йалтах урăхла тăраççĕ. Сăкăт йалсоветĕнчи нихăш йалта та суйлав саккунĕсене вĕренме кружоксем организацилемен. Суйлав саккунĕсем çинчен йалсовет пленумĕнче сӳтсе-йавнă та, лăпланнă. Буденнăй йачĕпе тăракан колхозра РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене пайанхи куна çитсе те сӳтсе-йавман. 8 бригадăран пĕринче те хаçат вуласа паракан çук. Çтена хаçачĕ иртнĕ çултанпа пĕр номĕр те тухман.

Мĕн çитмест-ха ку колхозра суйлав саккуне вĕренме? Колхозĕпе 3 учител, 1 вулав çурчĕн пуçлăхĕ, тата тепĕр агитатăр. Анчах вĕсем суйлав саккунĕсене вĕрентесси çинчен аса та илмеççĕ.

Тӳрех калас пулать, парти райкомĕ агитатăрсене уйăрса илес çĕрте тимлĕн ĕçлемен. Хăшпĕр агитатăрсем суйлав саккунĕсене хăйсем те тĕплĕн пĕлмеççĕ.

А. Польаков.

Икĕ колхоз ăмăртăвĕнче

ШĂХАСАН. „Пионер" колхоз (Ентрийал йалсовечĕ) „Комсомол" колхозпа йышăннă социалисăмла ăмăрту догăварĕнче кăçал вăтам шутпа гектартан 20 центнĕртан кайа мар тĕштырă туса илме палăртнă.

Кунсăр пуçне 19 гектар опытлă участкă çинче 140-шер пăт тулă, 130-шер пăт сĕлĕ, 120 пăт пăрçа, 140 пăт ыраш, 800 пăтран кайа мар çĕрулми туса илме пулнă. Çак опытлă участкă çинче колхозри стахановец—звеновод Фалалейĕв йулташа çирĕплетнĕ. Ăна иртĕ çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн республикăри сљотра 200 тенкĕ укçа тата сĕтел çине лартмалли сехет парса премиленĕ.

„Пионер" колхозри колхозниксем хăйсен умне лартнă задачăсене пурнăçлама, 1938 çулти çуракинчи пысăк пахалăхпа иртерме хатĕрленсе çитрĕç. Акма кирлĕ пулакан 479, 37 центнĕр вăрлăха трийерпе суртласа хунă. Вăрлăхсем 95—97 процент шăтаççĕ.

„Пионер" колхоз ĕç кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе те лайăх ĕçлет. Шăхасан МТС-чи Тимофейĕв Михаил машинист-стахановец (вăл „Пионер" колхоз членĕ) тăрăшнипе колхозра машиноведсене хатĕрлекен курс организациленĕ пулнă. Курсра 11 колхозник вĕреннĕ. Нумай пулмасть районтан пынă комисси курсра вĕреннисене 6 çынна сейалка çинче ĕçлеме, пилĕк çынна молотилкăпа ĕçлеме ирĕк парса хăварчĕ. Курсран В. Саватникăв, С. Алексанрăв „отлично", М. Денисăв, Матвейĕв, Демйанăв, П. Йегорăв колхозниксем „хорошо" паллăпа вĕренсе тухрĕç.

Кунсăр пуçне 13 колхозник Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнче заочнă йĕркепе вĕренеççĕ.

„Пионер" колхозникĕсем государствă умĕнчи обйазательствăсене парса татас ĕçре те малта пыраççĕ. Вĕсем йанвар уйăхĕнчех 1938 çулхи вăрман хатĕрлесе турттарас плана тултарнă.

Колхозра 4 бригадă. Пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхоз акана 8 кунта пĕтерме йышăннă пулсан, 2-мĕш бригадăри колхозниксем 7 кунта иртерме пулчĕç. Ку бригадă иртнĕ çулта та малта пынă, халĕ те малта пырать.

Ваç. Чернов.

„Агротехникăлă ĕçсен пахалăхĕшĕн

ТРАК, апрелĕн 20-мĕшĕ (телефонпа). Упи йалсоветне кĕрекен „Коминтерн" колхозра çак кунсенче 7 гектар çинче кĕрхи тырă калчисене апат панă. Вăл шутран 2 гектар çинче тислĕк шĕвекĕ, 5 гектар çинче суперфосфат сапса тухнă. Колхоз клевĕр те акса пĕтернĕ, пурĕ 23,5 гектар акнă. Халљ 10 гектар çине акма сĕлĕ, 2 гектар валљи çĕрулми вăрлăхĕсене йаровизацилеме хунă.

Йакимăв.

Преми илчĕ

Шетмĕпуçĕнчи (Йшлей р-нĕ) чăпта çапакансен промысла ертелĕ лайăх ĕçлет, плана вăхăтра тултарса пырать. Нумай пулмасть, кăçалхи çулăн пĕрремĕш квартăлĕнчи плана иртерсе тултарнă йатпа ертел членĕсен савăнăçлă вечĕрĕ пулса иртрĕ. Вечĕрта паллă стахановĕçсене: Йермолайĕв, Иванова, Игнатйĕва, Иванов, Степанăв, Иванов, Алексейĕва йулташсене укçа тата хаклă йапаласем парса премилерĕç.

Вечĕрăн художествăлă пайĕ уйрăмăнах тулли хаваслăхпа иртрĕ. Ертел членĕсен ачисемпе хĕрĕсем организациленĕ драмкружок „Маршăл ача чухне" йатлă пйесăна выљăса парчĕ. Пйесăна ачасем пултарулă выљарĕç. Промысла ертел правленийĕ драмкружока 150 тенкĕ укçа парса премилерĕ.

Халĕ драмкружок членĕсем хавхаланса май уйавне хатĕрленеççĕ.

Актив çĕнĕ ĕçсем пуçарать

Вырăс Нăрваш (Тăвай р.) йалсовечĕ районри малта пыракан йалсоветĕсенчен пĕри. Кунта хуçалăхлă-политикăлă ĕçсене лайăх пурнăçласа пыраççĕ. „ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмели займ" укçине 4.425 тенкĕ пухнă (çыраннинчен 78 процент). Самообложени укçине 3.969 тенкĕ пухнă. Государствăна аш-какай тăратмалли çурçул планне 60 процент тултарнă. Вăрман хатĕрлесе турттарас плана тахçанах пурнăçланă.

Йалсенче агитацилĕ-массăлă ĕçсене туса пыма вулав çурчĕ, икĕ клуб, шкулсем пур. Халĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренме йалсовета кĕрекен икĕ йалта пĕрер кружок организациленĕ. Вĕсенче 7 заљати туса иртернĕ. Колхозниксен пухăвĕсенче 3 хутчен суйлав ыйтăвĕне калаçусем пулнă. Нумай пулмасть, йалсовет пуçарнипе пĕтĕмĕшлĕ пĕлӳ паракан кружок организациленĕ. Клуб пуçлăхĕ Федăрăв йулташ 25 колхозника биологи, хими тата вырăс чĕлхине вĕрентет. Кунта та заљатисем йĕркелĕ пулса иртеççĕ.

Колхозниксем тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе, хамăр çĕршыври ĕçсемпе интересленеççĕ. Колхозниксен пухăвĕсенче Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ çинчен, Испанипе Китайри вăрçă ĕçĕсем çинчен тата ытти ыйтусем тăрăх та докладсем итлене. Массăлă ĕç вăйланса пырать. Ку ĕнтĕ йалта актив ӳснине пĕлтерет.

Мĕн çитмест-ха йалсовечĕн ĕçĕнче? Вăл çак ӳсекен активпа çителĕклĕ ĕçлеме пĕлменни, йалсовечĕн пĕтĕм ĕçне лайăхлатса йама пĕлменни пулать.

Йалсовечĕ çумĕнче 10 çекци организациленĕ. Вĕсенчен пĕр финанс çекцийĕ (руководителĕ Абрамăв йулташ) анчах лайăх ĕçлет, ыттисем начар ĕçлеççĕ. Колхозсем çумĕнче депутатсен группине организацилемен.

Суйлавçăсем панă наказсене нумайĕшне пурнăçламан. Суйлавçăсем ача йасли, столовăй, пулă кӳлли, канупа культура паркĕ тума сĕнӳ панă. Йалсовечĕ çаксене туса çитермен-ха.

Т. М.

ССР Союзĕн оборонине тĕреклетме

✪ Уйкас Йунтапа колхозĕнчи (Трак р-нĕ) колхозниксем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене хаваслансах илеççĕ. 65 çулти колхозник Йакăвлĕв, 60 çулти Артемйĕв 10-шер тенкĕлĕх илнĕ. Колхозĕ 300 тенкĕлĕх сарнă.

✪ Шупашкарти тир-сăран савăтĕнчи рабочисем лотерей билечĕсене 2045 тенкĕлĕх илнĕ. Халĕ вĕсем билетсен укçине тӳлесе татаççĕ.

Чăваш чĕлхин çĕнĕ программисем

Чăваш чĕлхин 1933 çулта йышăннă программи тата ун тăрăх çырнă учебниксем пăрахăçа тухни чылай пулать ĕнтĕ. Шкулсем йулашки вĕренӳ çулĕсене программăсăр, учебниксемсĕр иртерсе пычĕç. Вĕренӳ пахалăхĕ кун пек чух мĕнле пулма пултарни каламасăрах паллă.

Кивĕ программăпа ун тăрăх çырнă учебниксем чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçе вырăс чĕлхине вĕрентессинчен уйăрса, унăн (чĕлхен) ӳсĕмне нациле хĕсĕклĕхре тытса тăнă. Кăна епĕр термин ыйтăвĕсенче те питĕ аван куратпăр. Акă грамматикă терминĕсем: кӳртĕм, пуплев, пуплев хуçи, калав, пусăм, пайташ, ĕçхĕлтĕш, сум йачĕ, ылмаш, пĕтĕçтерӳ, чĕвĕ, урлă тытăнсатăру, йунашар тытăнсатăру тата ыт. те. Вĕсем пуçран туртса кăларнă терминсем, вĕсем чĕлхе йавленийне формă йенчен кăна палăртаççĕ.

Кивĕ программăпа ун тăрăх çырнă учебниксем уйрăм сăмахсене калас ыйтăва йе ваттисем каланă йĕркепе, йе ĕлĕкрех каланă йĕркепе, йе пĕр-пĕр уйрăм вырăнта каланă йĕркепе çирĕплетесшĕн пулнă. Тĕслĕх: пушта, стурăш, ăшкап, ăстарик, кăранташ, туска, учитлĕ т. ыт те, анчах ку сăмахсем культуралă калаçу чĕлхинче тахçанах урăхла çирĕпленчĕç: почтă, сторăж, шкап, старик, карандаш, доска, учител т. ыт. те.

Интернационаллă сăмахсене çырас ыйтăва кивĕ программă та, учебниксем те пăрса хăварнă.

Халљхи вăхăтра Чăваш Çутĕç Халăх Комиссариачĕ пуçламĕш тата вăтам шкулсем валљи чăваш чĕлхин программине туса пĕтерсе, ăна РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариатне çирĕплетме тăратрĕ.

Çĕнĕ программăсем киввисенчен мĕн йенчен урăхларах-ха? Чи малтан—çĕнĕ программăсенче грамматикă материалне вĕренӳ çулĕсем тăрăх калăпĕш йенчен те, çистемă йенчен те вырăс шкулĕсем валљи вырăс чĕлхипе панă программăри пекех йĕркеленĕ. Чăваш чĕлхин уйрăмлăхĕсенчен килекен грамматикă материалĕсем çеç темăсен йĕркине кăшт улăштараççĕ. Сăмахран, пуçламĕш шкулта сасăсемпе паллаштарас йĕркене улăштарнă,—фонетикă, морфологи принципĕсемпе çыхăнакан орфографи правилисене ĕлĕкхи программăри пек уйрăмăн паман, вĕренсе пыракан грамматикă материалĕпе çыхăнтарса пынă. Вăтам шкулăн программинче „сасăпа саспалли" йатлă пайри материала тĕплĕнрех çистемăланă, кунтах урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсене çырассине те йĕркеленĕ. Ку материала уйрăм подтемă туман, ăна чĕлхен тĕп саккунĕсене палăртакан подтемăсенех йĕркелесе кĕртнĕ. „Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмах" тени кунта çителĕксĕр термин, вăл сăмахсем—интернационаллă сăмахсем, вĕсене тĕрĕс каласси, тĕрĕс каланине йышăннă алфавит урлă тĕрĕс çырасси. „Предложениле членсем" йатлă темăна хутлă предложенисемпе паллаштарнă хыççăн панă. Мĕншĕн?

Мĕншĕн тесен хăшпĕр предложениле членлă предложенисем хутлă предложенинчен пĕртте уйрăм тăмаççĕ, çавăнпа та хутлă предложенисене вĕреннĕ хыççăн ачасем предложениле членлă предложенисене аванрах ăнланаççĕ. „Уйрăмлă ăнлантару сăмахĕсем" темă, вырăс чĕлхин программинчи пекех, „Урăх çын сăмахлă предложенисем" темă умĕнче тăрать.

Вăтам шкулăн çĕнĕ программи чăваш чĕлхипе вырăс чĕлхине йунашарах вĕренсе пыма май парать. Вĕренекен, чăваш чĕлхи урокĕнче чăваш чĕлхин йавленийĕсемпе паллашнă хыççăн, çав йавленийех вырăс чĕлхи урокĕнче курать, хăй ăнланса илнине танаштару урлă тата ытларах çирĕплетет. Программăн ăнлантару пайĕ пĕрпек йе пĕрпек мар материалсемпе танаштару урлă мĕнле паллаштармалине кăтартса парать.

Определени, дополнени, обстойательствă терминсене программăна кĕртни чăваш чĕлхине тĕплĕрех вĕренме пулăшĕ. Ку терминсем грамматикăн темиçе категорийĕсене пĕрлештереççĕ, çавăнпа ачасен логикăлă ăнланăвне ӳстерме пулăшаççĕ. Ĕлĕкхи терминсем: урлă тытăнсатăру, йунашар тытăнсатăру, çум т. ыт. те—формалљнă грамматикă терминĕсем, çавăнпа та текста анализлас ĕçе чăрмантаратчĕç.

Партин Чăваш Обкомĕ панă кăтартусем тăрăх кĕртнĕ çĕнĕ терминсем чăваш чĕлхине вĕренес ĕçе чылай çăмăллатĕç. Малашне чăваш чĕлхин саккунĕсене вĕреннĕ çĕрте „пайташ", „ĕçхĕлтĕш", „чĕвĕ", „пуплев хуçи" пек пуçран туртса кăларнă, содержанисĕр терминсене астума кирлĕ мар, кунта епĕр вырăс чĕлхинчи терминсемпех усă куратпăр. Чĕлхе йавленийĕсене пĕтĕçтерсе, грамматикăна аванрах ăнланма пулăшакан хăшпĕр терминсене ĕлĕкхисенех хăварнă, сăмахран: йапала йачĕ, паллă йачĕ, хисеп йачĕ, пур падежсен йачĕсем т. ыт. те.

Çĕнĕ программă чарăну паллисем лартас практикăна та кăшт улăштарать. Кивĕ программă пĕр йышши членлă предложенисенче тата союз умĕн запйатăйă лартма хушатчĕ. Çĕнĕ программă чарăну паллисем лартас тĕлĕшпе пĕр йышши членлă предложенисенче те ытти анлă хутсăр предложенисенче те вырăс чĕлхинчи йĕркесенчен нимĕнле уйрăмлăх та тумасть. Чĕлхе уйрăмлăхĕсенчен килекен хăшпĕр вырăнсене программăра кăтартса панă, сăмахран: йе вĕрлĕ сăмахсем кĕрекен предложенисем, предложениле членлă предложенисем, хăшпĕр хутлă предложенисем.

Программăна ăнлантарса панă пайра чылай методикăлă ыйтусене хускатмасăрах хăварнă йе хăшпĕр ыйтăва хускатнă пулсан та, çийелтен çеç палăртнă. Методикă кабинечĕсен, педагогикăлă опыта сарас май, нумай çул хушши ĕçленĕ учителĕсен паха ĕçĕсене хаçатра çутатса пымала.

С. П. Горский.

Шањдунри партизанла йухăм

Йапонецсем Шањдун провинцин столицине — Цзинане туртса илнĕ хыççăн, çав провинцинче Йапоние хирĕçле йухăм уйрăмах вăйланнă. Хаљхи вăхăтра йапонецсен тылĕнче Китай партизанĕсем 200.000 çын ытла вăрçаççĕ.

Партизансен отрйачĕсем, тĕпрен илсен, Йапони захватчикĕсен тискерлĕхне тӳссе курнă рабочисемпе хресченсенчен тăраççĕ. Вăл рабочисен пысăк пайĕ малтан Йапони предприйатийĕсенче ĕçленĕ пулнă, анчах вĕсем унтан тăшманшăн ĕçлес мар тесе тухса кайнă. Нумайăх пулмасть, Баошањри (Цзинањрен хĕвелтухăçнеле) 30 пин горњак партизансемпе пĕрлешсе сăрт-тусем çине тухса кайнă.

Партизансем хушшинче малтан Циндаори пирăвăр хапрăкĕсенче ĕçленĕ хĕрарăмсем те нумай.

(ТАСС).

Турцире çĕр вăйлăн чĕтреннĕ

Апрелĕн 19-мĕшĕнче Турцире çĕр вăйлăн чĕтреннĕ. Çĕр чĕтренипе 800 çын ытла вилнĕ. 50 пин çемйе нимсĕр тăрса йулнă. Çĕр чĕтреннĕ вырăнта сийен курнисене пулăшас ĕç пырать.

Çĕр чĕтренсе пысăк сийен пулнă пирки ССР Союзĕн Турцири полпречĕ Терентйĕв йулташ Турци правительствине кулянса пĕлтернĕ.

(ТАСС).

Çуллахи екскурсисем

Çуллахи кану вăхăчĕ, интереслĕ çулçӳрессипе екскурсисен вăхăчĕ пуçланать. Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн турисăмпа екскурси бӳровĕ екскурсантсем вальли Сойузăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче лагерсемпе туриссен çурчĕсене 138 туса хатĕрленĕ. Вĕсем Украинăри илемлĕ вырăнсенче, Хура тинĕс çыранĕсенче, Кавказ тăвĕсенче, Атăлăн симĕс çыранĕсенче, Селигер кӳлли патĕнче, Казахстанра, Запольартă вырнаçнă.

Екскурси çезонĕ май праçникĕн кунĕсенче уçăлать. Май праçникне уйавлама столицăна Совет Сойузĕн мĕн пур кĕтесĕсенчен пурĕ 2.000 екскурсант килĕççĕ. Майăн 1-мĕшĕнчен тытăнса Мускав — Атăл каналĕ тăрăх екскурси пуçланать.

Июљ уйăхĕнче турисăмпа екскурси бӳровĕ 1918 çулта Ворошилăв йулташ Луганскран Царицына пынă историлĕ походăн йĕрĕсемпе çулçӳрессине организацилет.

(ТАСС).

Румынире фашисла зоговорщиксене суда параççĕ

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх Кодриануна тата Румынире фашисла переворот тума хатĕрленнĕ фашиссен „тимĕр гварди“ организацин ытти пуçлăхĕсене те айăпласа чылай суд процесĕсем пуçланмала.

(ТАСС).

Азербайджан искусстви Мускаври вунакунлăхĕ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Азербайджанри паллă ашугсем Совет писательсен союзĕн членĕсем Авак Азарйан тата Асад Рзайĕв.
Ф. Швецов фото-ӳкерчĕкĕнчен (Союзфото).

Вăрман йухтаракан участкăсенче

91,9 пин фестметр йăвăçа шыва йанă

(Чăвашвăрманпром сводки тăрăх)

Хаљхи вăхăтра пур шывсем тăрăх та йăвăçсем йухтарас ĕç пырать. Анчах пĕтĕмĕшпе илсен пăйанхи куна вăрман йухтарасси çителĕклĕ пырать теме çук. Шывсем хĕрне турттарнă 121,3 пин фестметр йăвăççенчен апрелĕн 20-мĕшне 91,9 пин фестметрне çеç шыва йанă. Ыттисем Сăр тата Лућа шывĕ хĕрринче выртаççĕ.

Хура Безднă шывĕ тăрăх йанă 3 пин фестметр йăвăççем апрелĕн 19-мĕшне 53-мĕш километра йухса çитнĕ.

Уйрăмăнах ĕç Хура Безднă шывĕ çинче сӳреккĕн пырать. Шыв ăшăх пулнă пирки Хура Безднă шывĕ çине йанă 1500 фестметр йăвăççем вырăнтах тăраççĕ.

Лућа шывĕпе йухтармали 10 пин фестметр йăвăçран 5500 фестметрне кăна шыва йанă.

Сăр шывĕ хĕрринчи Муратихă пристанĕ патĕнче 5 пин фестметр йăвăç шыва йанă, вăл шутран 2 пин фестметр Улатăрти вăрман савăчĕсене çитнĕ те ĕнтĕ. Анчах унта йухса пынă йăвăççене шывран кăларасси çителĕксĕр пырать.

Трактăрсем ахаљ тăраççĕ

(Стаханăвĕц çырăвĕ)

Çĕмĕрле вăрманпункчĕн Кăмашари механизациленĕ çулĕ йулашки вăхăтра пит начар ĕçлеме пуçларĕ. Çул хĕрĕнчи складсенче турттармалли йăвăççем çук пирки трактăрсем ахаљ тăраççĕ. Турттармалли йăвăççем хăçан пуласси те паллă мар, мĕншĕн тесен вăрманта ĕçлекенсем сахал.

Трактăрсем ахаљ тăнă вăхăтра вĕсене йусама тытăнмала. Ку ĕçе те тума пуçăнман. Мĕншĕн апла? Çул руководителĕсем йаланах запаслă пайсем çук тесе шавлаççĕ. Анчах пăравус пуласси çине шанса запаслă пайсене илсе килме васкамаççĕ, — пăравус хăçан пулассн паллă мар-ха. Çавна пула слесарсем, смазчиксем, трактăриссем, монтажниксем вальли ĕç кирлĕ таран çук.

Кунта культурăлă-массăлă ĕç пачах çук. Пухусем пулмаççĕ. Социалисăмла ăмăртуна стаханăвла йухăма никам та йĕртсе пымасть. Ăмăртса ĕçлекенсем çук. Профсойуз организацийĕ массăсен ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе нимле ĕçсем те тумасть.

Саккун тăрăх, çунтармалли йапаласене перекетленĕшĕн укçа тӳлемеле. Çул çинчи стаханăвĕцсенчен чылайăшĕ çунтармалине перекетленĕ. Анчах никама та укçа памаççĕ. Профсойуз комитечĕ ун çине çавăрăнса та пăхмасть.

Механизациленĕ çулăн ĕçне купашкал хăвармала мар. Вăрманпункт руководителĕсен ĕçе халех тӳрлетмеле.

Гр. С. Чугунов.

Республикă тăрăх

Ача сачĕсем 1938 çулта Чăваш республикинче çĕнĕрен виçĕ ача сачĕ таваççĕ (Шупашкарта, Улатăрта, Канашра). Вĕсенче 225 ача вальли вырăн пулать.

Планериссем. Осоавиахимăн Сĕнтĕрвăрри районĕнчи совечĕ çумĕнчи планериссен шкулĕнче вĕренекенсем программăна теори йĕнĕпе вĕренсе пĕтерчĕç. Вĕсем теорине „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вĕренчĕç. Планериссем çитес кунсенчех уйа тухса вĕçме вĕренме пуçлаççĕ.

В. Закамский.

Çитĕннисене вĕрнтеççĕ. Кивçурт Маратри „Хĕрлĕ çăлтăр“ колхозра (Вăрнар р.) К. Григорйĕв йулташ çитĕннисене иккĕмĕш уйăх вĕрентет ĕнтĕ. Шкула пурĕ 20 çын çӳрет. Григорйĕв йулташ вĕсене майăн пĕрремĕш тĕлне „лайăх“ паллăпа вĕрентсе кăларма тăрăшать.

А. Пољаков.

Малтанхи тĕлпулу. Апрелĕн 16-мĕшĕнче Çĕрпӳри стадион çинче футболăн çуллахи çезонĕ пуçланчĕ. Вăл кун Çĕрпӳри йалхуçалăх техникумĕнчи тата Çĕрпӳри опытлă станцинчи командăсем футболла выљарĕç. Вăйă 2:2 шутпа никам çĕнтерейменнипе пĕтрĕ. Малтанхи футбол вăййине курма питĕ нумай халăх пухăннă.

И. Йегорăв.

Учительсен конференцийĕ. Апрелĕн 18-мĕшĕнче Шăхасан районĕнчи учительсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцине йалсенчен 170 учитель пухăннă. Конференци вĕренӳ çулĕнчи иккĕмĕш тапхăрăн итогĕсене шута илсе тухрĕ тата вĕренӳ çулĕ вĕçĕнчи задачăсемпе çураки вăхăтĕнче культурăлă-массăлă ĕçе туса пырасси çинчен сӳтсе-йаврĕ. Учительсен конференцийĕ активлăн иртрĕ, тухса калаçакансем чылай пулчĕç.

В. Чернов.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государства план комиссийĕ çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государства план комиссийĕн çак составне çирĕплетнĕ: ССРС Государства план комиссийĕн председателĕ — Н. А. Вознесенский йулташ, И. Е. Сабурăв, В. Н. Йемченко, И. В. Саутин, М. И. Рубинштейн, В. В. Бушинский, К. П. Касаткин, С. Ф. Демидăв йулташсем.

(ТАСС).

ССР Союзĕн Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариатĕнчен

Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕн Коллегийĕ Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕн пĕрремĕш заместителĕ, çирĕп большевик, социалисăмла индустрине вăйлатассишĕн çулăмлăн кĕрешнĕ Михаил Иванович Целишчĕв йулташ апрелĕн 21-мĕшĕнче ирхине 8 сехет те 30 минутра вăхăтсăр вилни çинчен кулянса пĕлтерет.

Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕн Коллегийĕ.

ХРОНИКĂ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ И. А. Бенедиктăв йулташа РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ заместителĕн тата РСФСР Совхозсен Халăх Комиссарĕн заместителĕн ĕçĕсенчен хăтарса, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн пĕрремĕш заместителĕ туна.

(ТАСС).

Йалхуçалăх литератури мĕншĕн çук?

Йалхуçалăхĕнче агротехникăлă çĕнĕ ĕçсем сарăлсах пыраççĕ. Йаровизаци, мулчировани, бионтизаци тата çавăн пек ытти çĕнĕ ĕçсем те йалана кĕчĕç. Колхозниксем çав ĕçсене хăнăхсах пыраççĕ. Анчах пирĕн çак ĕçсене татах та тимлĕн вĕренсе пымала. Практикăра вĕренсе пынă хушăрах, кĕнекесем тăрăх вĕренсе пыни те кирлех ĕнтĕ.

Вăйлă тырпулшăн тата йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешекенсене кирлĕ чухлĕ йалхуçалăх литератури памалах. Анчах суту-илӳ организацисем йалхуçалăх литературине вырăнсене çитерес тĕлĕшпе чăтма çук йапăх ĕçлеççĕ. Акă, Тăвай районĕн центрĕнчи магазинра „Культура таварĕсем“ текен уйрăм пур. Кунта йалхуçалăх ыйтăвĕпе çырнă пĕр кĕнеке те çук. Çавăн пекех йалсенчи лавкасенче те йалхуçалăх кĕнекисем çук, тесе пĕлтереççĕ.

Колхозниксем йалхуçалăх литератури ыйтаççĕ. Çак ыйтăва пурнăçласси — суту-илӳ организацисен хисеплĕ тата ответлă ĕçĕ.

Почтальйонсен канашлăвĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Çак иртнĕ кунсенче Кив Атикассинчи почта уйрăмне кĕрекен почтальйонсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура çураки вăхăтĕнче почтальйонсен мĕнле ĕçлемели çинчен сӳтсе-йаврĕç.

Почтальйонсем çураки вăхăтĕнче кашни колхозник патне хаçатсене вăхăтра çитерсе тăма обйазательства илчĕç.

К. Борисăв.

ШАХМĂТ-ШАШКĂ

Пĕр „хисепсĕр“ ĕç пирки

Шахмăтпа шашкă йухăмне физкультурăпа спорт ĕçĕсен Комитечĕ тивĕçлипе хисеплеменни çинчен пĕрремĕш хут мар çырма лекет ĕнтĕ. Çав чи массăлă спорта кайри плана тăратса хăварни çинчен çак кунсенче Шупашкарта пулса иртекен республикăри шахмăт турнирĕ те çителĕклĕ уççăн каласа парать.

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен Комитет председателĕ Свешникăв йулташ апрелĕн йулашки кунĕсенче çулйĕр йусанса çитменнине, çураки кампани хĕрсе пынине тата вĕренӳ çулĕ вĕçне çитсе пынипе пĕле тăркачах, çак пысăк ĕçе — шахмăт турнирне — апрел уйăхĕнче иртерме шут тытнă. Ахаљтен мар кăçалхи турнире Пĕтĕм Сойузри иккĕмĕш шахмăт категорине илнĕ М. Афанасйĕв учитель килме пултараймарĕ. Çавăн пекех виççĕмĕш категорилĕ шахматист Вазанăв та (Вăрмар р.) кăçалхи турнира хутшăнаймарĕ.

Чылай районсенчи шахматиссем çулйĕр йапăххипе, вĕренӳ çулĕ пĕтсе пынипе т. ыт. сăлтавсем пирки республикăри турнира хутшăнаймарĕç.

Тĕлĕнмеле, Комитетри пуçлăхсем çав тери пысăк ĕçе мĕн пирки çапла иртерме шутланă-ши?

Турнир пыракан пӳлĕм тăвăр. Курма пыракансене выљакансенчен уйăрма çук — шахматиссен сĕтеллисем умĕнче ушкăнĕ-ушкăнĕпе халăх кĕпĕрленсе тăрать.

Судйе вырăнче ĕçлекен Попов йулташ турнира хăна пек çеç пырса тухкаласа кайать. Унăн айăпĕпех турнирта шахмăт кодексне пăхăнман тĕслĕхсем пулаççĕ. Турнирăн распорйадитель çук. Выљакансене кирлĕ таран условисем хатĕрлесе паман.

* * *

Кăçалхи турнирта пурĕ 11 çын выљать. Шăпа йанă тăрăх вĕсен хушамачĕсем çакăн пек йĕркеленеççĕ: Завулонăв (Шупашкар хули), Говиг (Шупашкар), Гарбузăв (Канаш), Воскресенский (Шупашкар), Шелегăв (Шупашкар), Григорйĕв В. (Вăрнар р.), Алексейăвă (Шупашкар), Студенецкий (Шупашкар), Григорйĕв И. (Вăрнар р.), Остроумăв (Йĕпреç р.) тата Лукишов (Канаш).

6-мĕш тур хыççăн пĕрремĕш вырăнта республикă чемпионĕ Студенецкий пырать — унăн 6 очкоран 4,5, Гарбузовăн 4-ран 3,5 (пĕр парти пĕтмен), Воскресенскин 5-рен 4 (пĕр парти пĕтмен), виççĕмĕш вырăнта Шелегăв пырать, унăн 6 очкоран 4.

Мих. Ижейĕв.

Шăхасан шкулĕнчи шахмăтпа шашкă кружокĕ

Шăхасанти вăтам шкулта иртнĕ вĕренӳ çулĕнчех шахмăтпа шашкă кружокĕ организациленĕ. Вĕренекенсем кружок занятийĕсене интересленсе çуреççĕ.

Кружок турнирсем, сеанссем, блиц-турнирсем туса иртерчĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче квалификаци илмели турнир иртернĕ хыççăн пилĕк вĕренекен пилĕкĕмĕш категори илчĕç.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче кружок членĕсен йышĕ татах та ӳсрĕ, унăн авторитечĕ татах хăпарчĕ. Хаљхи вăхăтра членсен йышĕ 50 çынтан иртет.

Иртнĕ çулта 9-мĕш „А“ класра пĕр вĕренекен те шахмăтла выљама пĕлмен пулсан, кăçал 19 вĕренекентен 8-шĕ выљама пĕлеççĕ. Пур класра та çавăн пекех.

Кружок членĕсем тĕрлĕ конкурссенче те выљанă. „Клич пионера“ хаçат пĕр вăхăтра шахмат задачисене шутламалли конкурс ирттерчĕ. Ку конкурса 6 член хутшăнчĕç. Вĕсенчен иккĕшĕ (Григорйĕв, Хромăв) мала тухрĕç. Редакци вĕсене кĕнекесемпе премилерĕ.

Пирĕнни пек кружоксем республикăра сахалах мар. Анчах шахмăтпа шашкă комитечĕ вĕсене пĕрре те пулăшса пымасть, лайăх ĕçлесе пыракан кружоксене курмасть, хăйĕн активлă ĕçлесе пыракан членĕсене пĕлмест. Комитет халĕ те квалификацилĕ билет хатĕрлемест. Республикăри пĕртен-пĕр шахмăтпа шашкă турнирĕсене хăçан иртерессине лайăх кăтартса хураймасть: выљама пуçламалли куна йаланах улăштарать.

Мих. Афанасйĕв.

КИНО

Пуйан пурнăçа кăтартакан картинă

Шупашкарти кино-театр апрелĕн 22-мĕшĕнче кăçал Украинфиљм ӳкернĕ, ĕç халăх масси нумайранпа кĕтнĕ „Богатая невеста“ кино-комедине кăтартма пуçларĕ.

Ку картинă колхозри телейлĕ те савăнăçлă тата пуйан пурнăçа кăтартса парать. Колхозри ĕç колхозниксемшĕн савăнăç çăлкуçĕ пулса тăни ку картинăра питĕ уçăмлăн курăнать. Ĕçре çынсен паттăрлăхĕ, мухтавĕ палăрать. Ĕç çынсене савăнтарать. Социалисăм строительствин ытти участкисенчи пекех колхоз производствинче те ĕç паттăрĕсене йуратаççĕ, вĕсене мухтаса йурăсем йурлаççĕ.

„Богатая невеста“ фиљмра кăтартнă Згара трактăриспа паттăр колхозницă Маринă пек чаплă çынсем социалисăмла йалхуçалăхĕнче пиншерĕн, çĕршер пинĕн шутланаççĕ. Вĕсем — çĕнĕ çынсем, колхоз пăхса ӳстернĕ паттăрсем. Вĕсем ĕç çине те, йурату çине те çĕнĕ ăнланупа пăхаççĕ.

Ку картинăна пăхнă чухне пĕтĕм чунпа савăнса ларатăн.

— Пирĕн пурнăç — йурă, — тесе кăшкăрас килет. Санăн кăмăлу хăпарнă çемĕн хăпарса çунатланса кайать. Есĕ Згарăпа Маринăна тата ытти ĕç паттăрĕсемпе пĕр кăмăллă пулса савăнса ларатăн. Мĕн пек илемлĕ çанталăк! Тĕрлĕ кĕпесем тăхăннă хавас йаш-кĕрĕме курсан, сан умăнта çурхи çанталăкăн ытараймин илемĕ тухса тăнăн туйăнать. Акă хаваслă йурă шăранса илтĕнет. Ку йурра ĕç патне тухакан колхозницăсем йурлаççĕ:

Наша сила везде поспевает.
И когда запоет молодежь
Вся пшеница в полях подпевает,
Подпевает высокая рожь.

Тинĕс пек хумханса выртать вĕçĕ-хĕррисĕр уйхирте ăнса пулнă тыра-пулă. Хĕрӳлĕ ĕç пуçланать. Хăйĕн ĕçĕпе чапа тухнă трактăрис Згара машинăпа вырать, хĕрсен бригади кĕлтесем çыхса пырать. Ăмăрту йурри уйхире йанрать.

Çакă савăнăçлă ĕçре ĕç паттăрĕсен — Згарăпа Маринă йуратăвĕ çуралать. Вĕсем пĕр-пĕрне чĕререн чунтан-вартан йуратни колхоз счетовочĕ пулса ĕçлекен Ковыњкăна кĕвĕçтерет, вăл Маринăна качча илсе ĕç геройĕн упăшки пулса чапа тухасшăн. Счетоводра ĕçлесе мухтавлă çын пуласса шанмасть, — Маринă — чапа тухнă колхозницă. Ăна Мускава чĕнсе орден пама пултараççĕ, — тесе шутлать Ковыњкă.

Çав тĕллевпе вăл Згарăпа Маринăн йуратăвне сивĕтме шутлать. Вĕсем çинчен, начар ĕçлеççĕ тесе, суйа сăмах сарать. Анчах апла та ĕç тухмасть. Згарăпа Маринă пĕр-пĕрин пахалăхне ĕçре кураççĕ. Вĕсене пĕтĕм колхоз мухтать. Вĕсем иккĕшĕ те — мухтавлă ĕç паттăрĕсем. Ковыњкă сарнă суйа сăмахсем часах тăрă шыв çине тухаççĕ.

Комеди тыра-пулăна ăнаçлăн пухса кĕнине, Згарăпа Маринă йуратăвĕ тата та çирĕпленнипе вĕçленет. Ковыњкă хăйĕн суйа сăмахне йышăнать.

Уйхир ĕçне çĕнтерӳлĕн вĕçленĕ йатпа пулнă вечĕрта Ковыњкăна та колхозра учот ĕçне лайăх туса пынăшăн велосипед парса премилеççĕ.

„Богатая невеста“ — мухтава тивĕçлĕ картинă. Вăл куракансене савăнтарать, çав вăхăтрах Ковыњкă пек çынсене социалисăмла çĕршывра пур ĕç те мухтавлă пулса тăнине ăнланса илме пулăшать. Вăл тата совет кино искусстви комеди жанăрĕпе кино-картинăсем тăвас ĕçре пысăк ӳсĕм тунине кăтартать.

УСЛИ ВАÇЛЕЙЕ.

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕн“ ĕнерхи номĕрĕнче „РСФСР Верховнăй совĕтне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççин составне çирĕплетесси“ çинчен Пĕтĕм Росçийăри Тĕпĕçтăвком президиумĕ йышăннă постановленире йăнăш кайнă. Тĕп Суйлав Комиççин Секретарĕ Кафтанăв Çергей Васильевич тата Комиççи членĕ Киселĕвă Аннă Андрейевнă тесе вуламалă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Академи театрĕнче

Апрелĕн 24-мĕшĕнче

Премйерă

Вырăсла çпектаклĕ

РАХМАНĂВ.

„ПРОФЕССОР ПОЛЕЖАЕВ“

(Беспокойная старость)

Режиççор С. С. МАРТАГИН лартать.

Художник И. Н. САПОЖНИКĂВ.

Талон №174. Абонимент №1 талон №16.

Пысăк Горький

Хуласен пройектне тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен государства институтĕнчи архитектăрсен ушкăнĕ Горький хулине планлас тĕлĕшпе генераљнăй пройект туса пĕтерне.

Пройекта РСФСР Комуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕн архитектурăпа планировка тĕп управленийĕ пăхса тухса çирĕплетнĕ.

Калама çук хăвăрт аталанса ӳссе пырса, Сталинла пилĕкçуллăх çулĕсенче — пĕрремĕш тата иккĕмĕш пилĕкçуллăх çулĕсенче — Горький хули çĕршыври чи шултра промышленнăçлă центрсенчен пĕри пулса тăчĕ, унта 1.100 пин çынна йахăн пурăнать.

Хаљхи вăхăтра хулари халăх пурăнакан 39 пункт (вĕсем хула йĕритавраш ĕнче вырнаçса тăраççĕ) вырăнĕсем çинче пĕрлĕхлĕ пысăк, социалисăмлă хула тăваççĕ.

Хулан архитектурăпа композици тĕлĕшĕнчи тĕнĕлĕ, унăн тăрăхла май тăсăлса выртакан центрĕ Ока шывĕ пулать. Унăн çыранĕ хĕррипе пулмалли чаплă та лайăх çĕнĕ урамсене пурăнмали тата обществăлă чи лайăх çуртсем, паркĕсем, скверсем т. ыт. те пулаççĕ. Ока хĕрринчи урамсене Стрелка патĕнчен пуçласа автосавăтран, Печорă патĕнчен Мызă таран тăсаççĕ.

Стрелкăна, ĕлĕк Нижегородски йармăркă пулнă района, Кремле тата Зеленый Сĭездран пуçласа кĕпер патне çитиччен выранăсене тумалли çуртсем çине, вĕсене архитектура тĕлĕшĕнчен илемлетесси çине пройектра уйрăмăнах тимлĕн пăхнă.

Облаç админстраци центрĕ Кремлре тата унпа ретĕн вырнаçса тăракан Совет площечĕнче пулать. Пĕтĕм хула центрĕ ĕлĕкхи йармăркă вырăнĕнче пулать, унтах çĕнĕрен Советсен Çурчĕ туса лартаççĕ.

Çынсем пурăнмали çуртсем ларакан урамсем 20—25-шер метр сарлакĕш таран пулаççĕ, магистраљсен сарлакĕш — 30—50-шер метр, буљварсен сарлакĕш — 60—80-шер метр, шыв хĕрринчи урамсен — 30—40-шер метр пулать.

Уйрăмăн илсен, Свердлăв, Ульйанăв, Фигнĕр тата Октабĕр урамĕсене 40 метр таран анлăлатма, Культура урамне — 50 метр таран анлăлатма шухăшлаççĕ. Ока шывĕ урлă касса çӳресси лайăхрах пултăр тесе, çĕнĕрен тăвата кĕпер: Молитовски, Парковый, Ворошиловски, Автозаводски кĕпересем тума шухăшлаççĕ. Çавăн пекех тата хула тулашĕнчи çыхăну вальли Атăл шывĕ урлă Печорски кĕпер тума палăртаççĕ.

Хула урамĕсен тăршшĕ пĕтĕмпе (пурин тăршшĕне те пĕрле илсен) 394 километртан 506 километра çити ӳсет. Хулара куçса çӳресси мĕнле пулмалине илсессĕн, ку тĕлĕшрен урамсем çапла пайланаççĕ: автомобилсемпе хăвăрт çӳремели, грузсем турттарса çӳремели, пассажирсене çӳремелли магистраљ урамĕсем тата халăх пурăнакан урамсем пулаççĕ.

Çĕнĕ Горькире пурăнмали çуртсене тĕпрен илсен 4 тата 5 хутлă тума палăртнă.

Горький хулине пур тĕлте те пĕр пек йăвăçсем лартса йешĕллетме, канупа культурăн тĕп паркĕ тума, сатсемпе скверсем тума, халăх пурăнакан кварталсемпе предприйатисем хушшинчи вырăнсене йăвăççем лартса йешĕллетме палăртаççĕ.

Хула йĕри-тавра вăрман-парк кăшăлĕ тăваççĕ.

Атăлпа Ока шывĕсем пĕрлешнĕ çĕрти, Стрелкăри тĕп порта анлăлатма палăртаççĕ. Унта вара хăвăрт çӳретмели грузсене йĕркелесе хатĕрлес ĕç, Ока шывĕн сылтăм çыранĕнчи пассажир портне (хаљхи Ока кĕперĕнчен 500 метр айалрах) тăвасси, Автозаводски, Мызински тата Моховогорски портсене тăвасси пĕтĕççе тăмала пулать. Пурте усă курмали çак тĕп районсемсĕр пуçне тата йатарласах промышленнăçлă причалсем пулаççĕ, вĕсене „Красное Сормово“, арман, нефтебазă вальли тата „Красная Сосна“ йатлă хăма çураакан савăт вальли тăваççĕ.

Пройектра шутăра промышленнăçлă районсем тума, предприйатисем йĕри тавра йешĕл йăвăççем лартма, санитари тĕлĕшĕнчен сийенлĕ предприйатисене хула тулашне куçарма палăртса хунă. Промышленнăçлă районсем пурĕ 7 пулаççĕ: Сормовă предприйатийĕсен районĕ, Мускав шоççе предприйатийĕсен районĕ, автосавăт комплекс предпийатийĕсен районĕ, Молитовски куст районĕ т. ыт. те пулать. Çаплах тата çĕнĕрен Çвердлăвски промышленнăçлă район тăваççĕ.

Шывсем хĕрринчи районсене, уйрăмăнах хуларисене, илемлетсе лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тумала пулать.

Хула тавраш нели питрех те илемлĕ, сывлăхшăн паха вырăнсене дачăсем, санаторисем, канмали çуртсем т. ыт. вальли уйăрса хураççĕ.

(ТАСС).

Çурт-йĕр хуçалăхĕнче ĕçлекенсен тата килти работницăсен Сойузĕн Групкомĕ

ÇАКНА ВĔЛТЕРЕТ:

Тара тытса килти работницă усракансен хăйсен килти работницисемпе ĕç догăварĕ тумала тата майăн 4-мĕшĕнчен пуçласа 15-мĕшĕ хушшинчи вăхăтра малтан тунă догăварсене регистрацилесе шута илеççĕ. Ку срук иртнĕ хыççăн догăвăр тумасăр йулнисене, çавнашкалах догăварсене регистрацилемесĕр йулнисене, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх, прокуратура урлă уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ йе 100 тенкĕ таран штрафлаççĕ. Догăварсене Çурт-йĕр хуçлăхĕнче ĕçлекенсен Сойузĕн Групкомĕнче тумала, унта кашни кунах, канмали кунсемсĕр пуçне, кăнтăрла иртсен 3 сехетрен 6 сехетчен йышăнаççĕ.

Апрелĕн 23 мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Хула совечĕн çуртĕнче килти работницăсен тата вĕсене тара тытнă çынсен пĕрлешӳлĕ пухăвĕ пулать.

Кун йĕркинче:

1. Ĕç догăварĕсене тăвасси çинчен, — Соловйов йулташ доклад тăвать.

Тĕрлĕрен ыйтусем.

Адрес: Карл Маркс урамĕ, 8, Гостиннăй. Телефон № 5—63 тата 1—31

Уполномоченный Чуващглавлита № 209. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301. 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.

Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.